С(Чув)
И 97
4-36303

Николай Ишентей

# Турă камăлĕ

сăвăсемпе поэмăсем



Национальная библиотека ЧР
4-036303

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КС(Чу
497

Николай ИШЕНТЕЙ

# ТУРĂ КĂМĂЛĔ

сăвăсемпе поэмăсем

Пайтах хура-шур курнă-тӳснĕ
тăван Çĕрпӳ районне
çитмĕл çул тултарнă ятпа
халаллатăп

кр

Çĕрпӳ, 1997 ç.

ББК 84 Чув. 7
Ч 34

ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНĂМ!

"Турă кăмăлĕ" кĕнекене сирĕн пата çитерме
çак ĕç коллективĕсемпе уйрăм çынсем
турă пулса пулăшрĕç:

— Çĕрпÿ район администрацийĕ (Пуçлăхĕ — МИХАЙЛОВСКИЙ М. А.);
— Çĕрпÿ типографийĕ (Директорĕ — ЕГОРОВА Л. Н.);
— ВОЛКОВ Геннадий Никандрович, академик (Мускав);
— "Спутник" çулçÿрев бюровĕ (Шупашкар).

Хаяр тĕнчере те илем чечекне хÿтĕлеме ырă кăмăлăра, ăшă сăмахăра, укçа-тенкĕре шелленменшĕн пысăк тав! Тавах, ырă çынсем! Çынна пани çухалман, пытарса хуни çухалнă, тет. Эсир ырă туни те çухалмасть — çавра çулпа çаврăнать, хуçи патне таврăнать.

Ч - 36303

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

ISBN 5-900 627-05-5

© Цивильская типография ЛР № 017

ПРОВЕРЕНО
2010

*Кашни ăру ĕненĕвне*
*Упрать пĕр самана кăна.*
*Ĕненмесен ӗтӗм хăйне*
*Йăван та юл мăн çул хĕрне.*

*Кашни ăру ăс-хакăлне*
*Туптать пĕр самана кăна.*
*Вăл çав ăс-хакăл аллине*
*Парать çĕршыв ăраскалне.*

*Кашни ăру ĕçне-хĕлне*
*Курать пĕр самана кăна.*
*Хурать те тараса çине,*
*Килес ăру парать хакне.*

## ТĂВАН ЕН — ÇĔРПӲ РАЙОНĔ

*Тăван Ен — Çĕрпӳ районĕ —*
*Эсĕ çитрĕн çитмĕле.*
*Ах, мăнтарăн вăхăт чанĕ,*
*Çапас çук çав кĕтмелле.*

*Пуçлăх кайрĕ, пуçлăх килчĕ...*
*Хурçă е бетон-им чин?*
*Вăхăта кунçул çеç виçĕ —*
*Йӳнеçсе пурнать-ха çын.*

*Районччен те пулнă имĕш*
*Ханлăхсем, кĕпĕрнесем...*
*Территори пайланнишĕн*
*Пайланмаççĕ йăласем.*

*Çĕрпӳ Ен уй-хирĕ анлă.*
*Ӳркенмен — пулать ăста.*
*Вăйпитти ача пек танлăн*
*Çул тытать район ăçта?*

*Вăл халь хĕрлĕ е шур енлĕ*
*"Раскулаченнăй" пуян.*
*Чун сиксе хак панăçемĕн*
*Улшăну вăйне туян.*

*Ав, ĕмпӳ-политик чанĕ*
*Çапрĕ çĕнĕ кĕвĕпе*
*Пукане вăййи пуçланăн*
*Вылямa çын шăпипе.*

*Пурпĕрех çын пурăнать-ха*
*Акатуй пасарĕнче.*
*Ӳсĕнет-мĕн мул хăвачĕ*
*Хутшăну ытамĕнче.*

*Пĕрлĕхре — вăй. Эпир унсăр*
*Пурте мĕскĕн чĕрчунсем.*
*Пурăнаймĕç çураçусăр*
*Çутçанталăкпа çынсем.*

*Пĕрлĕхре — çул. Пĕрлешсессĕн*
*Çын тени тухать çынна.*
*Çын тени, хăть мĕн тесен те,*
*Кирлĕ-çке çынна кăна.*

*Пĕрлĕхре — ăс. Анчах ăс та*
*Çаклансан мул тыткăнне,*
*Çын тени çынна ал тăсмĕ*
*Пулăшмашкăн пĕр-пĕрне.*

*Çавăнпа сăмах каласшăн*
*Чун кĕввин мехелĕпе*
*Телее пĕрле пайласшăн*
*Çĕрпӳ Ен çыннисемпе.*

*Тăван Ен — Çĕрпӳ районĕ,*
*Пин-пин çын шăпи пулса,*
*Ĕмĕр-ĕмĕр пурăн танлăн*
*Ыр малашлăха шанса.*

*Çĕрпӳ Енĕн пĕрлешӳллĕ,*
*Çураçуллă çыннисем,*
*Пулăр турă, пулăр пӳлĕх*
*Пĕр-пĕриншĕн ĕмĕрсем!*

# ЮППИ

Поэма

Чеччен вӑрҫинче вилнӗ чӑваш каччисене,
Раҫҫей ҫарӗн 50 салтакне асӑнса.

## 1. УМ ҪАВРИ

Эп — ҫул ҫӳревҫӗ атом.
Курмасть мана этем.
Пурне те эп куратӑп:
Ман куҫӑмсем — хӗлхем.

Эп — чӗрӗ пӗчӗк атом.
Илтмест сасса этем.
Локаторла тӑнлатӑп:
Ман хӑлхасем — хӗлхем.

Эп Космос пайӗ — атом.
Туймасть мана этем.
Вӑй-халӑм пит хӑватлӑ:
Ман сисӗм те — хӗлхем.

Манран хӑрать чун мурӗ...
Эп — чӗрӗлӗх пӗрчи.
Хамах — обсерватори,
Тӗнчемӗр тӗпчевҫи.

Кам пӗчӗккӗ, ҫав нишлӗ
Тени суя сӑмах.
Ӳт-пӗвӗм пӗчӗккишӗн
Кулянас ҫук пачах.

Пур хисепе картаймӑн —
Ун ҫук виҫе чикки.
Хӗвре пурнать-ха пайрӑм
Пиншер хут пӗчӗкки.

Молекула манран та
Пиншер хут пысӑкрах.
Вӑл этеме: "Гигант", — тет,
Пурнать хутшӑнура.

Хутшăнурах пурнаççĕ
Планета-çăлтăрсем,
Шакмак тĕвве çыхаççĕ
Нейтрон-электронсем.

Çак пайрăлу чикесĕр,
Кĕреймĕ ăс-тăна.
Вăл çĕр çинчи этемшĕн
Ыйту палли кăна.

Мана этем картмасть-ха
Ăс-тăн тĕпеленче:
Планетăпа пĕр тан эп
Этемлĕх умĕнче.

Чи пĕчĕк пайăн ăс пур.
Ăс-тăн хушать хăват.
Чи ăслă, чĕрĕ Космос
Манпа канаш тăвать.

Нихçан ларса канмастăп:
Кунçул — хусканура.
Мана этем курмасть те —
Пурнатăп эп унра.

## 2. ВИЛĔМ ПУСНĂ КАÇ

Мускав. Çар госпиталĕ. Тĕксĕм каç.
Чӳречерен юрпа сапать кăрлач.
Шалта юр мар, тăвар ӳкет пекех
Салтак суранĕ сурчĕ çĕрĕпех.

— Мĕскершĕн, командир?
— Анне, ан яр!
Хăлхасенче янрать аташнă сас.
Командăсем паратъ çар пусĕ мар,
Асап ку пӳлĕмре паратъ приказ.

Кунта нуша хуçса памасть кулач,
Салтак пăтти те вăй-хăват хушмасть.
Эх, пурнăç кустăрми — обойма пулĕ:
Салтак шăпи кунта хисепсĕр пуля.

... Мускав, Çар госпиталĕ. Лăпкă каç.
Чӳречерен пăхать салху кăрлач.
Тăвар сапма вăл чарăнчĕ пулас —
Аманнă салтакпа калаçрĕ врач:

— Эс халĕ те кĕмерĕн-и тăна?
Эх, яш ача, автомат мар сана,
Мĕн-ма паман-ши мечĕк е чуччу?...
Пустуй асап куратăн-çке ку чух.

Сестра та сăмахлать çурма саспа:
— Чеччен туппи ăна... Осколокпа...
— Эх, вăрçă, вăрçă. Юн. Пăтраштару.
Унпа терт курнă-çке кашни ăру.

— Салтак суранĕ йывăр-çке ытла та, —
Хуллен калать врач, — аллисем те татăк.
Осколок тивнĕ сулахай енне
Кăкăртанах... Чĕре ани тĕлне...

— Кайман-ши тарăна? — пăшăрханать сестра.
Çын пурнăçра ялан шанать ырра.
— Вăл хатĕр ĕнтĕ операцие.
— Апла пулсассăн пуçăнар ĕçе.

* * *

Телей те юплĕ сывлăх фронтĕнче,
Леш тĕнчепе çак пурнăç чиккинче.
Хирург алли пит шанăçлăн  вылять.
Чӳречере куççуль тăкать кăрлач.

Хирург алли пĕр чарăнми ĕçлет:
Чăлах ӳте сиплет, касать, çĕлет...
Анчах такам тухать хирĕçлеве,
Сив сывлăш çӳçентерчĕ ӳт-пĕве.

Курмасть хирург, анчах та вăл туять:
Çын шăпине хура хăват картать,
Пăшăлтатса шутлать минутсене,
Пусса хуçать яш ĕмĕт çунатне.

Хирург çĕçси йĕрлет кунçул йĕрне,
Анчах усал вăй пусрĕ ӳн çине

Яш ҫынăн пурнăҫ чиккине тупса.
...Ытла та вăхăтсăр ҫӳрет супса.

## 3. УЙРĂЛАС УМĔНХИ САМАНТ

Палата пĕчĕк, тупăк евĕрлех.
Сас-чӳ те ҫук — масар ҫинчи пекех.
Ҫын чунĕ уйрăлман-ха ӳтĕнчен,
Ҫут кун курмашкăн та турри пӳрмен.

Тăна кĕмест салтак... Тем аташать,
Хăрушă сăмахсем пăшăлтатать:
"Аннеҫĕм, утиял пуҫ урлă вит —
Чуна илме анать метеорит".

Ик алă вырăнĕ — юнланнă бинт,
Ĕсĕклесе макăрмалли камит,
Юрлать чăлах дуэт пек йынăшса
Е чунсăрлăх пародийĕ пулса.

Тен, тĕлĕрет салтак? Вăл тĕлĕкре
Вăййа тухма чĕнмест-и сар хĕре.
Пӳрне вăййи вылянăн такампа
Хускатрĕ шăппăн юнăхнă бинтпа.

Тăна кĕмерĕ каччă кунĕпе.
Ҫын чунĕ уйрăлман-ха ӳтĕнчен.
Ăшпиллĕ тухтăрсем пулăшнипе
Чĕри те тапрĕ ҫырлахса хуллен.

Анчах та чун чăтмасть: сикет, сикет...
...Ах, чун тени вăл малтанах сисет —
Телейсĕр шăпипе ҫураҫаймасть,
Чăлах ӳтре вăл вырăн тупаймасть.

* * *

Ҫын чунĕ уйрăлман-ха ӳтĕнчен.
Ҫын чунĕн пур иккен расна тĕнче:
Унта управҫă атом пуранать,
Пулассине вăл малтанах калать.

Çав атомăн хĕлхемлĕ сисĕм пур.
Вăл тўпери Юп çăлтăр пек çиçсе,
Кам юп курать-и е курать-и хур —
Хурать-мĕн туйăм урлă систерсе.

Çав атомăн обсерватори пур.
Этем сисмен хăватлă сисĕм пур...
Биоэфир ярать вăл Космоса,
Биоприборĕ тĕрĕслет ăса.

Салтакăн чунĕ те биоскоппа
Сăнать шăпа хыптарнă асапа.
Пророк хăлхи пулса прибор илтет,
Пророкăн куçĕпе те тинкерет.

Унтан кĕрет вăл çын пуç мимине,
Пĕр тапхăр шуйхатать ăс арчине,
Калать çут тĕнчере мĕн пулнине,
Этем ăс-тăнĕ чухлайманнине.

Хĕлхемлĕ сисĕм ячĕ чĕтрене
Чăлах салтакăн пĕтĕм ўт-пĕвне.
Тăна кĕмесĕр çын хыпар илет —
Вăл тĕлĕк пек экран çине ўкет.

... Ак, сăхă та тискер сунарçăсем
Алла илеççĕ çивĕч сăнăсем.
Вĕсен арăсланпа çапăçмалла —
Кашнин хăй хырăмне тăрантмалла.

Экран мĕлтлетрĕ — улшăнчĕç сынсем:
Каллех пыраççĕ ушкăнпа вĕсем.
Чухлаççĕ çут çанталăк саккунне,
Пăхаççĕ хуçалла çĕр-шыв çине.

Ăс-хакăл хĕç-пăшалĕ пур — прогресс,
Пăраласа малашлăха кĕрес.
Малашлăха чĕнсессĕн те ырри,
Каллех çын — сăхлăх туйăмĕн чури:

Çут тĕнчене ун парăнтармалла,
Ăна хурах пек пусмăрламалла.
Çак çăткăн тискер кайăк йăлинчен
Тасалаймасть хăйне хăй çийиччен.

Каллех экран ҫинче ҫӗн кадрсем.
Салтак хӑйне те курчӗ пӑхнӑҫем.
Сӑрт-туллӑ Чечченеваскать эшкер...
Вут-ҫулӑмпа хупланчӗ БТР.

Сиксе илет асаплӑн мӗскӗн чун,
Ҫакна тепре курас килмест-ҫке ун.
Тен, килӗ ырӑ кун хӗссе-пӗссе...
Приборӗпе сӑнать вӑл тинкерсе.

Сӑнать сисчевлӗ чун тӑван ене.
Ак, асӑрхарӗ вал савни чунне.
Сар хӗрӗн чунӗ шанӑҫпа ҫиҫет —
Хитре те сывӑ йӗкӗте кӗтет.

Телейсӗр чун шартах сиксе илет,
Биоскопа та куҫарма тивет.
— Савни патне каймашкӑн ман ҫул ҫук
Чавса таран ик аллӑм татӑк чух.

Салтакӑн чунӗ курчӗ амӑшне —
Куҫ пек кӗтет вӑл савнӑ ывӑлне.
— Анне патне кайма ҫул ҫук-ҫке ман —
Мӗн курӗ сусар ывӑлне курсан.

Салтакӑн чунӗ курчӗ ашшӗне,
Кӗтет вӑл вӑйлӑ та тӗреклӗ ывӑлне.
— Атте патне те каяс марччӗ ман —
Мӗн курӗ вӑл эп вӑйсӑрне курсан.

Салтакӑн чунӗ курчӗ-ҫке инҫе.
Сӑнанӑ май килес кунҫул уйне.
— Ах, ман валли ҫул ҫук ҫак ҫӗр ҫинче —
Вӗҫсе каясчӗ урӑх тӗнчене.

## 4. ЧУН ТУХНӐ САМАНТ Е КОСМОС КУҪ ХӖСНИ

Управҫӑ атом хушнӑ хӑватпа
Ҫын чунӗ калаҫасшӑн Космоспа.
Епле ҫыхӑнмалла-ши?.. Чун сикет...
Телей курмашкӑн ӑнтӑлса сикет.

Ав, кăкăр чиккинчи енчĕкĕнчен
Хашлатрĕ чĕрĕ сывлăш ерипен.
Управçă атом сисĕм хĕлхемне
Тĕллерĕ чĕрĕ сывлăш ытамне.

Чун тухнă вăхăт. Ӳкĕт сăмахсем.
Темле асаплăн туртăнать этем.
Пророк сăмахĕпе вăл сăмахлать —
Тĕллевлĕ шухăш уçлăха тухать.

Эй, Космос, Космос! Эсĕ ăслă пуль.
Тен, мирлĕ пурăнма хушатăн пуль.
Анчах сана ăнланаймасть этем.
Пулаççĕ çавăнпа тискер ĕçсем.

Çынпа калаçиччен чулпа калаç
Пăшал чĕлхи пуç пулнă вăхăтра.
Сан чĕлхӳне ăнкарайман палач
Пăшал азбуккине тытать асра.

Эй, Космос, Космос! Эсĕ мĕн е кам?
Чĕрех пулсассăн сассуна парсам.
Чăтма çук йывăр асапран çăлсам...
Мана валли эс çăлăнăç ярсам.

"Çынпа калаçиччен калаç манпа", —
Тесе каланăн сусăр салтака,
Гигант чĕрчун пек кăмăллă тӳпе
Куçне хĕсет Ыйту çăлтăрĕпе.

Таса чун çыхăнайрĕ Космоспа —
Ыйту хуравĕ пулчĕ ыйтупа.
Ах, кам ăнланĕ Космос чĕлхине?
Епле хуравлăн унăн ыйтăвне?

Мĕскер каласшăн çăлтăр — паллă мар.
Куçне хĕсет Юп çăлтăр е вăл мар?
Этем ăс-хакăлĕн ыйтăвĕсем —
Ăсчах галактика çăлтăрĕсем.

Хашлатрĕ сывлăш юлашки хутчен
Осколок çурнă кăкăр чиккинчен.
Управçă атом пурнăç хĕлхемне
Ӳтрен илсе куçарчĕ чун çине.

## 5. УЙРĂЛНИ

Палата пĕчĕк — тупăк евĕрлех.
Сас-чӳ те çук — масар çинчи пекех.
Салтакăн чунĕ уйрăлчĕ ӳтрен,
Мачча таран çĕкленчĕ ерипен.

Йăлттам çут пайăрка шуса пырать —
Уйрăлакан чуна ыйту парать:
Эс хатĕр-и? Асран тухмасть-и пил —
Хăвпа пĕрле ыр шухăш-туйăм ил.

Хăвар кунта хаярлăх туйăмне,
Сана чăрмантарать вăл малашне.
Мул шухăшĕ салантăр мур çине,
Кил шухăшĕ те ӳктĕр пил çине.

Чун сассăр систерет килĕшнине,
Кăшт сĕртĕнет çут пайăрка çумне:
Пит çăмăллăн туйма пуçлать хăйне —
Илет хăватлă ирĕклĕх вăйне.

Салтакăн чунĕ тинкерет çӳлтен
Чăлах кĕлеткине мĕнпур енчен:
Осколок ватнă йывăр сурансем,
Шăмми тĕпреннĕ хул тукмакĕсем...

Чуна кирли юлман-çке ӳт çинче.
Ĕпле пурнайăн унăн ăшĕнче.
Ак, йăлтăр çутă чун ăшне чăмать —
Çын чунĕ хăй те çутăлма пуçлать.

Салтакăн ӳчĕ вилчĕ пулмалла,
Вăл хытрĕ нихăçан хускалмасла.
Ӳт-пӳ вилнишĕн çын тени вилмест —
Вăл урăх пурнăçра тупать кĕтес.

Ӳт-пӳ вилнишĕн ырă çын вилмест —
Управçă атом чĕрĕлĕх кĕртет.
Илсе каять хайхи салтак чунне
Куç хĕсекен Юп çăлтăр тĕнчине.

Юп курăр тенĕн пăхрĕ çĕрелле,
Чун асăрхарĕ хăйĕн тăшманне.
Саккунсăр çын енне кăшт ӳпĕнсе
Тинкерчĕ вăл ачашшăн, хĕрхенсе...

Вăйран кайса чеччен ачи йăваннă.
Çапах парăнасса кĕтсе ан лар
Йыша ертсе пырсассăн юн тăванĕ,
Тăван юнне юхтараканĕ мар.

Ытла та çирĕп Шариат саккунĕ:
Хурахлăх, аскăнлăх вĕсемшĕн ют.
Ан пăс çав саккуна, юта ан сутăн...
Айăплисем — шутра: юхтарĕç юн.

Парламентра, ав, урăхла саккун,
Е геноцид, е конституци ун.
Чеччен ачи упрать хăй саккунне,
Ăна пăсмашкăн памĕ ĕмĕрне.

## 6. Ăсату

(Çуйланă çаври)

Пĕлетпĕр: пур Хĕвел системинче
Хитре планета. Тĕрĕ — ун çинче.
Ку чух такам та пĕлĕ ун ятне —
Сăмахĕ шахвăртать ăсчахсене.

Юпитер вăл — юп ырăсен ырри,
Тӳпе саррин чи-чи хитре тĕрри.
Çӳл тӳпене карса тăраканни,
Вăрттăнлăхне пĕлсе упраканни.

Аваллăхри этем ăс-тăнĕнче
Юпитер пулнă çӳл тӳпе турри.
Этем паян та хăй ĕмĕтĕнче
Унтах шырать-çке йăпану юрри.

Тĕнчемĕр хур кăтартнă мĕскĕн чун
Ӳтне хăварчĕ çĕр çине салхун.
Юпитерăн эрешлĕ каррине
Сирсе вăл кĕчĕ çĕнĕ тĕнчене.

Йалттам юп çăлтăр пулчĕ мĕскĕн чун.
Ӳт-пӳ вырăнĕнче — юп çутă ун.
Юппи тесе чĕнер-и ятсăра —
Çын чунĕпе чĕм кĕнĕ çăлтăра.

* * *

Поэзи туррине ман пуç тайсах
Пехил ыйтса каласчĕ виç сăмах:
Юп кăтартсассăн çак "Юппи" ята,
Юп курăпăр чи йывăр самантра.

Е шанмасан таса хăват вăйне,
Ĕненмесен тивлетлĕ сисĕмне,
Кĕç тӳртĕн кĕрсе тӳртен тухĕ хăй
Килтен киле çӳрен чи ырă вăй.

* * *

Поэма çаврине татах вулар,
Этемлĕх туйăмне ăша хывар:
Юпитер вăл — эпир çитмен инçет,
Юп туйăм пурăнать çын чунĕнчех.

Салтакăн чунĕ ĕнтĕ тӳпере.
Унта ыр куртăр ĕмĕр-ĕмĕре.
Юппи тесе чĕнер-и ятсăра —
Çын чунĕпе чĕм илнĕ çăлтăра.

* * *

"Хитре юмах ку", — тейĕ вулакан, —
Поэма пăрăнать чăн пурнăçран.
Çапах, юмах çуралнă чăнлăхра
Текен идея пур наукăра.

Апла пулсан, каçарăр автора.
Вăл турă мар кунта — айван чура.
Наука акулишĕн те Юппи
Пулса тăмасть-и ăнтăлу таппи?

Тиркевçĕ витĕмлĕ сăмах, тен, тупĕ —
Утопи сĕмĕ пур поэмăра.

Таса хута вараласа ан супăн —
Поэт ĕçне вăл харама ярать.

Анчах та пуç тавра кăшт çавăрар-и:
Илем пурнать хăй уйрăм тĕнчере.
Илемлĕхе курни — утопи мар-и?
Ыр туйăмсен утравĕ те хитре.

Асамçă çеç те мар, поэт-çуйланчăк,
Ниçта çук утрава куракании.
Ăсран кайни тесе те ан калаçăр:
Вăл — туйăмпа ăса картаканни.

Хăвар хур шухăша кăра тиркевçĕ, —
Улăштармастăп хам шухăшăма.
Поэмăри утопи пултăр евчĕ
Салтак шăпи пирки сăмах татма.

Аваллăхри этем ăс-тăнĕнче
Юпитер пулнă çӳл тӳпе турри,
Телейсĕр каччăн пурнăç чиккинче
Сăмахăм пултăр ăсату юрри.

## 7. КĔМĔЛ ПĔЛĔТ УТРАВĔ ÇИНЧЕ

Хисеплĕ вулаканăм, поэта
Халапçă ырăнне хума тăхта.
Асамçă та ăсчах та мар кунта:
Çӳрет-çке туйăм ăс-тăнран малта.

Пĕр кĕлĕмçĕ пулăшăва чĕнет,
Тепри тата усал чирпе типет —
Туйăмсене мала хурса поэт,
Çын шăпине кăмăлĕпе виçет.

Вăл халăх туйăмне пĕр пăнчăна
Тĕллеттерсе хирлӳ туртать кăна.
Вĕçет çав туйăм ирĕк тĕнчене —
Сăмахĕ куçĕ Космос чĕлхине.

Саккун уçмарăм эпĕ çĕнĕрен,
Ăна чӳклевçĕ пĕлнĕ ĕмĕртен:

Куçарнă вырăнтан çăлтăрсене
Шута илсе пур халăх кăмăлне.

Çынсем! Юппи çинчен хыпар пĕлер —
Çĕмрен вĕçне юп туйăма тирер...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Хĕлхем хăват чўк халăх туйăмне
Ăсатрĕ Кĕмĕл пĕлĕт утравне.

* * *

Салтакăн чунĕ çăлтăр халь — Юппи.
Пĕрлешрĕ Космоçпа этем шăпи.
Юппи тавра пирĕштисем тăраççĕ,
Тусан пĕрчи ўкмешкĕн те памаççĕ.

Лăпкаççĕ, ачашлаççĕ чарăнми,
Пăхаççĕ ун çине ытарайми.
Юппи хушсассăн çур сăмахранах
Пурне те пурнăçлаççĕ самантрах.

Утрав çинче мĕн кирлĕ — пурте пур.
Кунта никам та курмĕ мăшкăл-хур.
Кунта саккун çырмаççĕ тиексем,
Йĕрке тумаççĕ çăткăн пурмиссем.

Кунта саккунлă хурахсем пусмаççĕ;
Сўпĕлтисем ухмах сутти тумаççĕ.
Тупаймăн картлашка хăпармалли
Çурма ăс-тăнлă карьерист валли.

Кунта Çăлакана пăталамаççĕ,
Поэтсене касамата хупмаççă.
Хаяр патша е нишлĕ президент
Указ-хушу паман, тет, ĕмĕртен.

Кунти тĕнче пур пĕтĕм йышĕпе
Пурнать-мĕн юрату саккунĕпе.
Пурмис ĕçне тăваççĕ поэтсем,
Çунат хушаççĕ чун хоралĕсем.

Кунта çук референдум блокĕсем,
Пурне те йăлăхтарнă суйлавсем...

Пĕрне-пĕри çимеççĕ эшкерсем,
Вĕрмеççĕ кĕрт йытти пек партисем.

Салтак халь салтак мар, Илем патши.
Ун пурнăçĕ — Юп çăлтăрăн ташши.
Çав çемĕпе хĕвел ал çупрĕ халь,
Планетăсем те çаврăнаççĕ вальс.

... Анчах Юп çăлтăр чунĕпе — салтак:
Салтакăн тăмалла-çке хуралта.
Ун хĕмĕ — позитрон — сиксе илет.
Ах, чун тени ырă мара сисет.

Юппи приборĕпе Çĕре тĕллет.
Мĕн пулнине курать те тĕлĕнет...
Биолокаторĕ хута каять —
Биохăват сăмах вăйне куçать.

## 8. ЮППИ МОНОЛОГĔ

Аван-и, çынсем, çут тĕнче хуçисем!
Шанманччĕ те пуль ман сасса илтессе.
Эх, кам-ха шутланă кунта килессе,
Килпетсĕр Чеччен вăрçинче пĕтессе...

Кунта, Кĕмĕл пĕлĕт утравĕ çинче,
Нумай ман пек чун. Пурте ырă, таса.
Анчах вĕсен йышĕ сахал çĕр çинче.
Унта çавăнпа пурăнмашкăн асап.

Пĕлетĕр-и, Космос вăл — чĕрĕ объект.
Вăл ăслă та лăпкă гигант чĕрчун пек.
Анчах организмĕ ун питĕ шĕвек —
Пур çын та сисеймĕ çав чĕрĕ тĕвве.

Тупаймĕ этем Космоспа килĕшӳ
Ăна пусмăрласшăн кăна тĕрмешсен.
Хайхи пархатарсăр шырав-кĕрешӳ
Хăватлă вăя сивĕтет этемрен.

Çапах акăш-макăш пит пысăк чĕрчӳн
Çынна пулăшма та пачах ӳркенмест.

Ч-36303

Национальная библиотека
Чувашской

Анчах космосран пулăшу ыйтнă чух
Виçе туйăмне кашни çын пĕлеймест.

Ыйтать Космосран пĕри çăлтăр-шăпа
Чаппа, мухтавпа çутăлас шухăшпа.
Тепри ыр вăя хăйне май çавăрса,
Усал тĕллевпе вырнаçасшăн влаçа.

Чи çăткăнраххи хатĕрленчĕ вăрçа —
Вăл çăлтăр çинче те пуласшăн хуçа.
Пăшал тыттарасшăн Нептун аллине,
Торпедо лартасшăн комета çине.

Планета — диктатор, планета — чура.
Пуçа тайма тивĕ планета-турра.
Çак çăлтăр вăрçи хĕвеле хĕретет,
Шикле метеор хӳрине хĕстерет.

Каллех çĕнĕ вăрçă — килпетсĕр пасар,
Планета шăпи унта пулĕ тавар.
Каллех тӳсме тивĕ хура асапа,
Анчах хальхинче пысăкрах масштабпа.

Мана çак сăлтав хĕтĕртет шырама —
Юп çăлтăр çинче те памарĕ канма.
Хăш-пĕр çитĕнӳ турăм çакă ĕçре —
Эп тупрăм гигант Космоспа пĕр чĕлхе.

Çĕр — пĕчĕк планета. Тусан — космосра.
Тусан пĕрчисен те саккунĕ кăра:
Самантлăх пăсмасăр орбита çулне
Вĕсем пухăнаççĕ эфир утравне.

Çын — пĕчĕк планета. Тусан — пурнăçра.
Анчах çутçанталăк саккунĕ кăра:
Самантлăх пăсмасăр хевтеллĕ çулне
Вĕсем пухăнаççĕ пĕр халăх йышне.

Пĕр халăх йышне тепринпе тустарни —
Чăн-чăн катастрофа ... Йĕрке пăсăлни.
Орбитăран тухнă этемлĕх йышне
Нихçан та лартаймăн калла вырăнне.

Пĕр халăх йышне тепринпе пĕтерни —
Этемлĕх хăйне хăй çиме тытăнни.
Мĕн чул нумайрах тискер çын ăс пухать,
Хăйне çавăн чул хытăрах вăл туллать.

Çапла эпĕ тухрăм пĕр шухăш патне:
Тивет çĕнетме çыннăн чун тытăмне.
Халь тупнă ăслай азбуккийĕн кодне
Пытармăп эп кăкăр чиккин енчĕкне.

Планета-Çĕре эпĕ çитĕп калла
Юп турă пулса, чи таса сывлăшла
Çынсен ăшĕнчи усала хӳтерма,
Этемлĕх чунне çăтлăхран сиплеме.

Юп туйăм валеçĕп мĕнпур тĕнчене,
Уçса çăлтăрсен варĕнчи енчĕкне.
Кашни çыннăн çăлтăрĕ пур тӳпере —
Сăвап сывлăшпа вăл çĕнеттĕр сире.

... Чим, тăхтăр самант... Уйрăлмашкăн тивет —
Мана электрон делегаци кĕтет.
Сар Кун конгресне чĕнчĕ Аслă тĕнче.
Çынсем, сывă юлăр! Тепре куриччен...

# ÇУРАЛМАН АЧА САССИ

Поэма

## 1. ПĔРРЕМĔШ ЭРНЕ

Пĕлмест пĕр çын та чун хушăннине,
Çак тĕнчене "çĕн кайăк" килнине.
Анчах та эпĕ пур. Пурнатăп, ав, эрне.
Хăм сăмаха калатăп тĕнчене.

Пĕлмест анне те эпĕ пуррине,
Пĕлмест атте те эпĕ килнине.
Анчах та эпĕ пур. Илтетĕн-и тĕнче?
Ман евĕр çын пулман-ха халиччен.

Çут уйăх курчĕ: "Кĕмĕл кайăк пуль".
Хĕвел йăл кулчĕ: "Ылтăн кайăк пуль".
Анне çаплах сисмет эп килнине,
Пĕлмест атте те эпĕ пуррине.

Е "ылтăн-и", е "кĕмĕл-и" — ăнланăр:
Эп çын. Çынах. Çынран юласшăн мар.
Телей курмашкăн тивĕç те пур манăн —
Этем прависĕр кайăк пулас мар.

Тавах: тухаççĕ уйăхпа хĕвел.
Вĕсем пулсассăн, çитĕ-ха мехел.
Тĕнче те пĕлĕ эпĕ пуррине,
Хисеплесе пуç тайĕ ман енне.

## 2. ВИÇÇĔМĔШ ЭРНЕ

Кама мĕн ĕç эп вĕтĕркке пулни.
Чи пĕчĕк чунăн пур хăйне пӳрни.
Пĕччен пурнатăп хăтлă керĕмре —
Парне те парăм çук ман халлĕхе.

Кунçул пама ыйтатăп аннерен,
Телей сунма ыйтатăп аттерен.

Ан шикленсемĕр парăма кĕме —
Ăна татмашкăн хатĕрех парнем.

Парни хамах-çке: эп арçын ача.
Сенкер куçсем — ик йалтăркка шăрçа.
Ман евĕр кăмăл тĕнчере пĕрре.
Çав кăмăл еккипе тапать чĕре.

Хăрах питре вылять хĕвел çути.
Çиçет çут уйăх шевлипе тепри.
Çавна анне сисмест — чĕри сисет.
Курмасть атте те — кăмăлĕ килет.

Аннен ачаш чĕри эп килнĕрен
Чĕкеç пулса юрларĕ пĕр кана.
Çуначĕ тутана тивретнĕрен
Чĕкеç чĕлхиллĕ турĕ вăл мана.

Атте чĕри салатнă тĕвĕрен
Хăватлă кăйкăр тухрĕ ирĕке.
Çуначĕ кăмăла çĕкленĕрен
Çав кайкăр евĕр чунăм ĕрĕхет.

Вунсакăр кун тултартăм эп паян,
Вунсакăр çул та çитĕ пурăнсан.
Ман сассăма та илттĕр çут тĕнче,
Ан мантăр шутлама суйлавсенче.

Вут кайăк кăмăлне туять поэт,
Сар кайăк сассине илтет поэт.
"Çĕн кайăка" та эс пĕрре тăнла,
Ман сассăма пĕр ăстрăм рифмăла.

Тĕнче суйлавĕ пулмалла тепре,
Унта суйлаççĕ çĕнĕ ĕмĕре.
Çав суйлавра бюллетеньсем çеç мар,
Кашни çынна чун хĕлхемне тыттар.

Ман сассăма пĕр ăстрăм рифмăла,
Суйлавçă панă сас тесе шутла.
Чун тĕпĕнчен çут тĕнчене кăлар —
Эп халь этем прависĕр кайăк мар.

## 3. ÇИЧЧĔМĔШ ЭРНЕ

Ак хускалаççĕ пĕчĕк аллăмсем,
Ак вылянаççĕ ĕнтĕ урасем.
Эп юратасшăн пултăм аннене,
Чуппа тăвасшăн пултăм аттене.

Вĕсем шутлаççĕ урăххи çинчен —
Пустуй çĕклем чăрмантарать иккен.
Анне калать: "Пулмасть ÿстересси".
Атте калать: "Çĕклемĕ ытлашши".

Çав çĕклеме пăрахмалла вĕсен —
Çемье бюджечĕ шăтăклă иккен.
Ма пăлханатăр-ха, атте-анне?
Эп çитĕнсен саплатăп шăтăкне.

Чĕлхем туять чĕкеç эреветне,
Туять-çке кăмăл кайкăр хăватне.
Анчах никам та сассăма илтмест,
Никам та шухăш-кăмăла сисмест.

Атте ятлать çĕршыв çулне-йĕрне,
Анне ятлать инфляци йыттине.
Ма кулянатăр-ха, атте-анне?
Тяппи ман пусĕ тĕрĕс çул çине.

Чупма хатĕрленеççĕ урасем,
Чăмăртанаççĕ пĕчĕк аласем.
Тата кăштах ÿсем-ха: ун чухне
Хÿтерĕп эп инфляци йыттине.

Парламентăн сăвапсăр саккунне
Ма ылханса вăрçать атте-анне?
Мĕнле парламент? Ун мĕнле саккун?
Пĕлетĕп эп: саккун пур юратун.

Пĕлетĕп эп: тытать вăл тĕнчене,
Çыхăнтарать телей кăвапине.
Ăна пăхăнакан кашни этем
Пулмасть тĕнчешĕн ытлашши çĕклем.

...Телей саккунĕн ҫитĕ-ши мехел?
Хавхалантарчĕҫ уйăх та хĕвел:
Пехил парсассăн аҫупа аннӳ,
Мехел ҫитет, иртет иккĕленӳ.

Юратупа ачашлăх саккунне
Пĕрле илсе тухас-ха тĕнчене.
Ман ал-ура тĕрекленсессĕнех
Унпа тивĕҫтеретĕп кашнинех.

Пархатарне кăтарттăр тĕнчене,
Телейлĕ тутăр пур телейсĕре.
Васкамалла ман ирĕке тухма,
Сăвапсăр саккуна ылмаштарма.

...Анне чĕри шакканине илтетĕп.
Чуна ҫӳҫентерсе сиксе илет вăл.
Ман сисĕм органĕ илет хыпар:
Тĕнче аннен ачаш арки ҫеҫ мар.

## 4. САККĂРМĔШ ЭРНЕ

Такам шари туса ҫухăрнăран,
Шартах сиксе вăрантăм ыйхăран.
Аппа ку, Таня. Килнĕ садикрен.
Ăна эп уйăратăп сассинчен.

Эп чышкăпа юнатăп Таньăна:
Эй, пысăк хĕр, мĕн кирлĕ-ха сана?
Пурнатăн ирĕк аслă тĕнчере.
Ташлас чухне ҫӳрен йĕре-йĕре.

Тухмарĕ сасă хăтлă керĕмрен —
Кăшкăрнине пулмарĕ илтекен.
Эп, авă, куртăм-илтрĕм пĕтĕмпех:
Канашлăва пуҫтарăнать ҫемье.

Эпир тăваттăн хамăр ҫемьере:
Атте, анне, Танюша, эп тепре.
Анчах ҫемье канашĕ, иҫмасса,
Нихҫан та итлемест-ҫке ман сасса.

Танюшăпа калаçрĕç аслисем,
Мана сăмах чĕнмеççĕ те вĕсем.
Аттешĕн эпĕ чĕрĕ чун та мар,
Аннешĕн эпĕ тан праваллă мар.

Йĕрет-çке Таня. Мĕншĕн вăл йĕрет?
Кўренчĕклĕ саспа пит ĕсĕклет.
Йĕрет вăл тантăшне кўреннĕрен,
"Чăваш чĕппи" тесе витленĕрен.

Эх, Таня, Таня! Эс мĕскер тăван?
Ху пысăк ĕнтĕ — пурпĕрех айван.
Анне чăваш, атте чăваш — пĕлен.
"Чăваш" тенишĕн мĕншĕн кўренен.

"Чăваш чĕппи" тесе чĕнсен мана,
Чуп тунă пулăттăм калакана.
Çынсем асăрхани — телей вăл, Таня.
Мана çак тĕнчере, ав, пурте маннă.

Анне илет сана арки çине,
Парать Йăваш чăваш ачашлăхне.
Эх, Таня, Таня! Эс çаплах йĕрен,
Мăнаçланас чухне эс кўренен.

Атте пуçлать сана лăплантарма,
Хăватлă алă илчĕ ытама.
Эх, Таня, Таня! Ма тута тăсан?
Хавасланас чухне эс юншăхлан.

Чĕкеç пулса вĕççе тухас килет,
Хĕр ачана ман йăпатас килет.
Часрах тухасчĕ çутă тĕнчене,
Шăлса илесчĕ Таня куççульне.

...Ача йĕрет — анне хута кĕрет,
Атте ятла-ятла ăс вĕрентет:
"Калаç ялан аван чĕлхепелен,
Йăлтах ман ху чăваш пулни çинчен".

Атте, мĕскер калатăн эс пире?
Мĕнле аван чĕлхе пур тĕнчере?
Чи аванни — атте-анне чĕлхи.
Унпа ăçтан тавлашĕ урăххи.

Илтетĕр-и: чĕлхемĕр те чĕтрет.
Чĕлхе те Таньăпа пĕрлех йĕрет.
Пĕрне лăпкаççĕ, тепĕрне таптаççĕ,
Мăшкăлласа çӳп шăтăкне яраççĕ.

Ачаш та ырă кăмăллă анне!
Мĕн-ма хута кĕместĕн чĕлхене?
Мĕн-ма илмесĕн аркăку çине?
...Лăпланчĕ Таня — ĕсĕклет чĕлхе.

Патвар та çирĕп кăмăллă атте!
Мĕн-ма хӳтĕлеместĕн чĕлхене?
Мĕн-ма илместĕн кăмăл ытамне?
...Йăл кулчĕ Таня — хаш сывлать чĕлхе.

Атте-анне мана итлеменрен
Часрах тухас килет çак пӳлĕмрен.
Чĕкеç пулса вĕçесчĕ тĕнчере,
Лартасчĕ хам çине чĕлхемĕре.

## 5. ТĂХХĂРМĔШ ЭРНЕ

Пĕлетĕп эп кулма та, кӳренме те.
Куратăп та илтетĕп чиперех.
Телей ачи пулма ĕмĕтленетĕп.
Хĕвел çути çитет-çке кашнинех.

Ман сисĕм органĕ пурне те пĕлĕ:
Сивве, ăшша, усалпала ырра.
Несĕлсене пĕр вунă ĕмĕр ĕлĕк
Упранă сыхлăх пурăнать манра.

Чун сисрĕ усала — пытанмалла.
Пуçа чикес анне чĕри айне.
Çырлахтарма инфляци йыттине
Мана персе парасшăн пулмалла.

Анне! Анне! Хур шухăшна хӳтер!
Шуйттан чури туса ан кӳрентер.
Арçурие тухасшăн мар, анне —
Çынна тухмашкăн эп ĕмĕтленетĕп.

Арçурисем ахаль те сахал мар
Шиклентереççӗ чӑвашсен чунне.
Турат хуçаççӗ вӑрманта çеç мар,
Йӑлтах ватаççӗ несӗл йывӑçне.

Чун сисрӗ усала — пытанмалла.
Анчах ниçта та хӳтлӗх çук пулас.
Ман тӑхӑр сыпӑкри ват асанне
Юн таппинчен кӑларчӗ сассине:

Чӑваш хӗрарӑмӗ мӗн ӗлӗкрен
Шикленнӗ-мӗн ача амакӗнчен.
Шикленнӗ... Пурпӗр чун тӗпренчӗкне
Персе паман акар йыттисене.

Хӑрах урийӗ тупӑкра пулсан та
Ача кипкийӗсем ун пулнӑ янтӑ.
Хӗрарӑм чунӗсӗр этем кӑна
Хурах пусать пуль айӑпсӑр чуна.

Амак пулмастӑп саншӑн эп, анне.
Илтетӗн-и чӗреçӗм таппине.
Эп сывӑ-çке. "Эпи" те пилсӗр мар.
Ача амакӗ халь хӑрушӑ мар.

Сӑпка юрри мана асамласан,
Анне кӑкри хӑй сиплӗхне хушсан,
Тӗпренчӗкрен çӗкленӗ пӑхаттир.
...Анне, тур панӑ телее ан сир.

Ӳссессӗн тухӑп эп "вут кайӑка"
Хӳтӗлемешкӗн мӗскӗн çынсене.
Акар йытти те тарӗ аякка
Инфляци те хӗстерӗ хӳрине.

Анне, çӑлсам чӗрӳн тӗпренчӗкне.
Ан ил хур çылӑха чӗрӳ çине.
Турри шутлатӑр юлнӑ кунсене.
Йытта персе ан пар, анне!
...Анне-е!

## 6. ВУННĂМĔШ ЭРНЕ

Скафандр пек кĕпе хӳтлĕхĕнче
Эп кутăн-пуçăн çаврăнма пĕлетĕп.
Атте, çакна курман-çке эс пĕрре те.
Эп саншăн чикелентĕм хальхинче.

Атте, мĕн-ма каллех сăмах чĕнместĕн.
Тен, халĕ те мана эс çын теместĕн?
Атте, манран эс ним те ан пытар —
Эп халь çынран нимпе те катăк мар.

Арçынпала арçын калаçнă пек
Кала тӳрремĕн: мĕншĕн кунĕпе
Эс йывăр шухăш-кăмăлпа çӳретĕн,
Саманана та ылханса илетĕн?

Тĕнче пасарĕ кĕр кĕрлет, анчах
Аллу сан ĕç патне пымасть пачах.
Эс тăхăр сыпăкри асаттерен вĕрен —
Пасарсенче те илне вăл тĕрек.

Çич уйăх илейменшĕн ĕç укçи
Питех ан хуçăл — çирĕп хулпуççи.
Чăваш чăтма вĕреннĕ ĕмĕртен.
Тата кăштах чăт эп çураличчен.

Эп — сывă çын — сан кăмăлна çĕклетĕп,
Эп кутăн-пуçăн çаврăнма пĕлетĕп.
Пулсассăн ку чухне çаврăнăçуллă,
Пасар ĕмри те килĕ ăнăçуллă.

Чăтсам тата кăшт, чăтăмлă атте!
Ылханлă арçури ан ту манран.
Ар пуçĕн çулĕ терт-нуша енче,
Малашлăха курать вăл ачинче.

Чăваш ар пуçĕнче кантра çĕрмест,
Çынна кӳрентерни çĕре ӳкмест.
Ар ывăлне сутса яран ар пуçĕн
Кунçулĕ типĕ шанкă евĕр хуçăк.

Чăваш чунне тĕвĕлекен атте!
Мĕн-ма ултав ачи тăван манран?
Пулас ачу ултав ачи пулсан,
Килес кунне мĕнпе сыпăнтаран?

Чăтсам, атте, ан хуçăл ытлашши.
Тăхта ултав ачи тума манран.
Эп çакă çутă тĕнчене тухсан,
Чечек те çурĕ несĕл йывăççи.

## 7. ВУНПĔРМĔШ ЭРНЕ

Пуç пўрнине ĕметтĕм киленсе...
Сисмен те, эпĕ кайнă тĕлĕрсе.
Çăхан сăмсиллĕ çын килсе кĕрет,
Телей кăвапине касса илет.

Хăла юпах тиха хўри çумне
Çыхасшăн вăл телей кăвапине.
Хăла тиха кĕç-вĕç тапса сикет,
Акар йытти ман хыççăн ĕрĕхет.

Ўт-пĕвĕм сў тăвать. Шартах сиксе
Вăрантăм эп хăрушлăха сиссе.
Тĕнче ахăлтатать: "Чăваш чĕппи,
Пўрне телейĕпех çырлах, эппин".

Тулли телей валеçекен тĕнче!
Инкек ачи туса ан кўрентер!
Шăпа телейĕ кăвапа çинче.
Вăл пур пулсан, эп сывă та чипер.

Телей ачи çуратакан тĕнче!
Инкек ачи туса ан кўрентер!
Тулли этем эп. Ман юн таппинче
Кунçул таппи те палăрать чипер.

Чăваш чунне тĕвĕлекен тĕнче!
Тĕнче кулли туса ан кўрентер!
Арçурие тухса вăрмансенче
Çĕтсе çўресшĕн мар-çке эпĕ те.

Ахаль те чăвашсем çут тĕнчере
Çĕтсе çÿреççĕ тĕрлĕ çĕрсенче.
Пур вăй-халне те пултарулăхне
вĕсем парăймĕç хăйĕн халăхне.

Çак пурăнăç — хăналăх çеç. Пĕрех
Ачашăн та сăйлавĕ хĕсĕкрех.
Ларасшăн мар эп кун кĕрекинче,
Çынна çитесчĕ тетĕп çул çинче.

Тĕнче! Тĕнче! Кĕтрет çути тĕпрет —
Çухалнă çын та тупăнса килет.
Кун куркине тыттар эс кашнине,
Ан питĕрсем кунçул калинккине.

Эй, çут тĕнче! Кĕртсемччĕ хăнана!
Хам кĕпене саклат парап сана.
Пулас ача шăписене татни
Пулать-и пурнăçра саплаштарни?

## 8. ВУНИККĔМĔШ ЭРНЕ

Пуçхĕрлĕ ÿкрĕм эп чикеленсе,
Тĕнче мана илтменшĕн кÿренсе.
Кайран лăш пулнă пит ывăннăран.
...Мухтав юрри вăратрĕ ыйхăран.

Янрарĕ гимн Чăваш Республикин.
Çурхи тĕнчемĕр чĕрĕлет-çке тин.
Такам чĕри сикет савăнăçпа.
Ман чунăм тулнă йывăр хуйхăпа.

Мухтав юрришĕн хапăл самана
Илтмест пулас çуралайман çынна:
Аннеçĕм кайрĕ тухтăрсем патне
Татса яма телей кăвапине.

Анне ларать шап-шурă пÿлĕмре,
Шутлаççĕ минутсем ман ĕмĕре.
Çут хăчă пурнăç çиппине касать.
Эй, турă. Тухтăр та хурах пусать.

Анне выртать шап-шурӑ пӳлӗмре,
Шутлаççӗ çеккунтсем ман ӗмӗре.
Мухтав юрри çуратнӑ самана
Илтес темерӗ хурлӑхлӑ çынна

Мухтав юрри çуратнӑ самана
Илтет пулас поэтсене кӑна.
Ман сассӑма та рифмӑла, поэт.
Тӑнлатӑр самана та президент.

Куратӑп эп: кӗрекере поэт.
Куран куçпа вӑл курмӑша перет.
Анчах куран куçа тусассӑн курмӑш,
Сӑмах ӗречӗ кӗвӗленӗ урмӑш.

Илтетӗп эп: трибунӑра поэт.
Илтен хӑлхи ун илтмӗше перет.
Хӑлха çине суя упа пуссан,
Чӑн-чӑн упа ташӑçине тухать.

Тӑнлать мана каçалӑкри поэт.
Нуша курни нуша мӗнне пӗлет.
Хӑватлӑрах пулаймӑн турӑран —
Мана эс çӑлайманшӑн ан кулян.

...Анне чӗри тапать, тапать, тапать...
Халатлӑ тухтӑра вӑл тав тӑвать.
Мухтав юрри пулса та çаврӑнать,
Хурчка пулса чуна тӑпӑлтарать.

Ман тӑхӑр сыпӑкри ват асанне
Юн таппинче кӑларчӗ сассине:
"Çамка çине этем çураличчен
Турри хура çыру çырать иккен".

...Ман юлашки çеккун юн тумламне
Çӗре ӳкермӗ... Ах, анне!...

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

...Сасси çӗтсен те, янӑрарӗ ахрӑм.
Куçать вӑл сӑвӑ çаврӑмне вӑраххӑн.

## 9. АХРĂМ ÇАВРИ

Сăпка юрри савмасть пуш сăпкана.
Мухтав юрри савать мухтакана.
Укçа куçасшăн укçалли патне.
Шырать телей те телейлисене.

Чапли мухтать хăй пек чаплисене.
Вăйли те ал тытать вăйлисене.
Хăватсăрри патне хăват куçмарĕ.
Телейсĕрри патне телей пымарĕ.

Çуралайман ачашăн сӳнчĕ çутă.
Тĕнчемĕр курмăш пулчĕ-çке ăна.
Пуçа ухса сăмах пуçларĕ ода.
Çав кĕвĕпе янрарĕ самана.

Мухтав параппанне çапа-çапа,
Çĕкленчĕ параппанçă та чаппа.
Çуралайман ача сасси çĕтет —
Ун ахрăмĕ чуна шиклентерет.

Çуралайман ача шăпиллĕ лира
Телейсĕр ахрăм сас çине çеç пырĕ.
Лăплантарасшăн мĕскĕн мĕскĕне
Тĕртсе пăхать чи çепĕç хĕлĕхне.

Хӳхлев юрри тумлатрĕ куççульне
Хĕрес çинчен поэт чĕри çине.
Анчах та икĕ тăлăх — тăлăх мар.
Пĕрле пулса хиврен сăмах калар.

## 10. ЭП ВИЛСЕН ТЕПĔР ÇУЛ

Анне мана пăрахсан,
Йытă пычĕ туллама.
Тартăм-тартăм йытăран —
Кăшлаймарĕ чунăма.

Атте манран пăрăнсан,
Çулăхрĕ хура çăхан.

Тартăм-тартăм çăханран —
Чунăм хăтăлчĕ аран.

Пăрахсассăн та анне,
Пăрахмасть уйри çăка.
Уй пурне те курнăран
Эп те пăхрăм аякка.

Пăрăнсассăн та атте,
Пăрăнмасть лаштра юман.
Эп сире те халь илтеп
Вăрманта хăлха пуртан.

Анне мана пăрахни
Шăп çулталăк çитнине
Мăрьере çил шăхăрни
Йыхравларĕ каçхине.

Манăн чунăм çĕр хута
Таврăнчĕ тăван киле.
Кĕтĕм эп çурхи сада
Ӳхĕ пек хӳхле-хӳхле.

Чĕвĕлти чĕкеç пулса
Лартăм пĕр турат çине.
Эреветлĕ юрласа
Систеретĕп килнине.

Ирхине атте, анне
Сада тухрĕç ман пата.
Çуралайман ывăлне
Паллаймарĕç, тупата.

Çуралман çын чунлине
Чухлаймарĕ-ши аттем?
Чунăм чĕкеç пулнине
Тĕшмĕртмерĕ-ши аннем?

Таня çеç аслисемпе
Эпĕ халиччен илтмен
Ăнланма çук чĕлхепе
Чĕвĕлтетрĕ тем çинчен.

Çепĕç аллипе анне
Ачашларĕ Таньăна.
Темĕнле ют чĕлхепе
Юрă вĕрентет ăна.

Атте вăйлă аллипе
Вĕлт çĕклерĕ Таньăна,
Урăх халăх чĕлхипе
Ăс парать пулас ăна.

Тĕлĕнтĕм эп чăннипех:
Тăван чĕлхем çĕтнĕ-шим?
Е ăна та ман пекех
Йытта персе панă-шим?

Чăваш чĕлхи ман пекех
Арçурие тухнă-ши?
Кĕреймен-ши хӳтлĕхе —
Йытă çисе янă-ши?

Курăк пулса тайăлса
Сĕртĕнетĕп аннене.
Вăл хăварчĕ таптаса
Йыт çӳппипе пек ачине.

Турат пулса авăнса
Ытăлатăп аттене.
Ку та ывăтрĕ хуçса
Йыт хӳри пек ачине.

Пултăм эп хура çырла —
Илĕртетĕп Таньăна.
"Йыт çырли" тет пулмалла —
Тапрĕ ывăтрĕ мана.

Йыт кăшланă телейпе
Халь çӳретĕп çĕрĕпе,
Хăрушла йĕре-йĕре
Хăратас тесе сире.

# ӲКЕРЧĔКЛĔ ÇЫРУ

Поэма

## 1

Алăка, анне, ан яр кĕле —
Кукамай хăнана килмелле.
Яланах Çĕнĕ юр эрнинче
Пулнă эп кукамай çумĕнче.

Шăнкăрав сас парать янратсах.
Кукамай пуль — кĕрсемĕр часрах.
Ах, ку — тантăш... Чĕнет урама.
Тухасси пулас çук выляма.

Кукамай килессе кĕтнĕрен
Куç каймасть чӳрече тĕлĕнчен.
Килетех, килетех кукамай —
Юр çусан килекенччĕ пĕрмай.

Алăкра сасă пулчĕ каллех.
— Кукамай, эп уçатăп халех.
Ах, ку кăлтăр хӳреллĕ пурсуй.
Кĕрсе вырт-ха — çӳретĕн пустуй.

Юр çуса иртнĕ-çке ĕнерех —
Кукамай хăнана килетех.
Кукамай хăнана килнĕ кун
Уяври пек хаваслă ман чун.

Ак, шаккаççĕ татах алăкран.
Кутамкка курăнать чи малтан.
Юрататăп сана, кукамай.
Мĕншĕн эс кĕттеретĕн нумай?

Кукамай, кӳр кунта кĕрĕкне,
Маларах ирт, сĕтел хушшине.
Йăстарах-ши минтерлĕ пукан?
Çул çинчен, кукамай, ларса кан.

Кукамай, кукамай! Кучченеçĕ нумай.
Туллипе çеç килетĕн пĕрмай.

Кукамай, кукамай! Калаçатăн сăпай.
Ыр тăватăн пурне те пĕрмай.

Кукамай хăнана килнĕ кун
Уяври пек хаваслă ман чун.
Тăп-тулли кучченеç аллăмра,
Куç тулли кукамай умăмра.

## 2

Çитмĕл çичĕ пĕркеленчĕк
Кукамай сăн-питĕнче.
Пурнăç çулĕ йĕркеленчĕ
Кукăр-макăр йĕрсенче.

Ах, кун-çул тĕрленчĕкĕ
Тарăн пĕркеленчĕклĕ.
Мĕнпе чĕрмеленĕ-ши?
Мĕн каласшăн пулнă-ши?
Çак тĕрленчĕкре?
Çырăвĕ ӳкерчĕклĕ,
Тарăн пĕркеленчĕклĕ.
Савăнмалли пулнă-ши,
Кулянмалли пулнă-ши
Çак ӳкерчĕкре?
Çитмĕл тĕрĕллĕ ӳкерчĕк
Кукамай кĕпи çинче.
Чĕмсĕр хĕлĕхлĕ пĕркенчĕк
Чĕнтĕрленĕ тĕрринче.

Тĕрĕсен ӳкерчĕкĕ —
Вăрттăнлăх тĕрленчĕкĕ.
Камăн ятне çырнă-ши,
Мĕн каласа çырнă-ши
Çак ӳкерчĕкре?
Тĕрĕ мерешкеллĕ-çке,
Пурнăç çулĕ евĕр-çке...
Кукамай кун-çулĕ-ши,
Несĕлсемĕр ячĕ-ши
Çак ӳкерчĕкре?

3

Чашласа сас парать сӑмавар.
Куҫ тулли кукамай юнашар.
Ӑшӑ пӳрт пӗветет сӑн-питне,
Чей курки чуп тӑвать тутине.

— Иртнӗ кун ҫутине йӗрлекен
Тарӑн йӗр тупсӑмне пӗличчен
Уйрӑлмастӑп санран, кукамай.
Пӗр кана калаҫар, кукамай.

Ҫав йӗрте пур кун-ҫул йӳҫекки
Тенӗ пек хуравлать чей курки,
Ватӑ ҫын аллинче чӗтренсе,
Пӗчӗк ҫеҫ кашӑка сиктерсе.

Чей курки чӗвӗлти чӗлхепе
Систерет ватӑ ҫын кӑмӑлне.
Кукамай шӑппӑн, ассӑн сывлать,
Чечче чашӑк пек уҫҫӑн калать.

## 4. Кукамай сӑмахӗ

Пире пӳрнӗ кун-ҫул
Сывламалӑх ҫеҫ.
Мӗншӗн хаш сывласа
Ӗмӗр иртерес.

Пире пӳрнӗ кун-ҫул
Калаҫмалӑх ҫеҫ.
Мӗншӗн хар кӑшкӑрса
Ҫынна сивӗтес.

Пире пӳрнӗ кун-ҫул
Савӑнмалӑх ҫеҫ.
Мӗншӗн хур шухӑшпа
Ҫынна хур кӳрес.

Пурӑнасчӗ ҫапла
Сывлӑш тухнӑ чух,

Пӳлĕх пӳрнĕ парне —
Хĕвел пăхнă чух.

* * *

— Кукамай, эс калаçнă чухне
Яр уçатăн ыр кун чатăрне.
Ах, анчах, пурнăçра час-часах
Усал вăй та пусать-çке хурах.

## 5. Кукамай юмахĕ

Çамрăк çыннăм, итле:
Калăп эпĕ юмах.
Çав юмах тупсăмне
Шыраса туп хăвах.

Усалпа ыр хăват
Пулнă, тет, ĕлĕкрен.
Ăс вĕреннĕ пулать.
Чăвашсем вĕсенчен.

Усалпа ыр хăват —
Вутлă хирĕç тăру.
Ырă ырлăх пиллет:
Вăл усалшăн — чару.

Усалпа ыр хăват
Варринче — хĕвĕшӳ.
Пурăнма вĕрентет:
Пурнăç вăл — кĕрешӳ.

Вĕрентӳ меслетне
Ан çухалтăр тесе,
Йĕркипе пир çине
Çырнă, тет, тĕрлесе.

Çав эреш-тĕрĕсен
Уйрăмшар татăкне
Пĕр çĕре çĕлесен
Пулнă, тет, кĕнеке.

Ыр хăват меслетне
Вĕрентен кĕнеке
Чăвашсем хушшинче
Тытнă çирĕп йĕрке.

Çав тĕрре вуласа
Çын вĕреннĕ ăса —
Усала путарма,
Ыррине пулăшма.

Усал вăй пит чее —
Систермест хăй çинчен,
Тĕттĕм каç хӳттине
Пытанать çынсенчен.

Акă вăл тĕттĕмре
Пĕр сас-чӳсĕр шăвать,
Çав асамлă пирре
Вут тĕртсе çунтарать.

Ăс пуххи кĕлленет —
Усал вăй çĕнтерет.
Çын ырра ĕненет —
Çĕнĕ тĕрĕ тĕрлет.

Анчах çын та чее
Усал вăй умĕнче —
Ыр хăват меслетне
Вăл тĕрлет хăй çине.

Ыр хăват асамне
Илнĕрен хăй çине
Пилсĕр вăй асапне
Парăнман ĕмĕрне.

Çавăнпе халăхра
Вăй-хăват иксĕлмен,
Тапнă ырă хавха
Тĕрĕсем хушшинчен.

Ырă ĕç меслетне
Хăй çине илекен
Ĕç тытсан аллине
Ăнтарать çеç куллен.

Тĕрĕ — уйрăм тĕнче,
Тĕрĕ — ырă хăват.
Ун эрешĕ çинче
Мерчен кайăк пурнать.

Çавăнпа эп сĕнеп
Çĕнĕ кун çыннине
Вуласа вĕренме
Тум-юмсен тĕррине.

* * *

— Чăвашсен çĕр те пин юрринчен
Пĕр çавра юрласа париччен
Уйрăлмастăп санран, кукамай.
Ůрататăп сана, кукамай.

## 6. Кукамай юрри

Авăтса сас парать сарă кайăк:
Çын шăпи сар хĕвел аллинче.
Пурнăç çулĕн сенкер тăваткалĕ
Кун-çулпа ăсату хушшинче.

Авăтса сас парать тăхлан кайăк:
Çын шăпи турăсен аллинче.
Сулхăн сыпнă çынсен ăраскалĕ
Ыррипе усалли хушшинче.

Авăтса сас парать мерчен кайăк:
Çын шăпи çыннăн хăй аллинче.
Кашниннех хăйне май ăраскалĕ
Телейпе ăнăçу хушшинче.

* * *

Сар шевле тĕррипе çиçекен
Мерчен кайăк çинчен пĕличчен
Уйрăлмастăп санран, кукамай.
Тепĕртак калаçар, кукамай.

# 7. Мерчен кайăк

Мерчен кайăк пулнă чăвашсен.
Вăл çуралнă теççĕ хĕвелтен.
Авăтса сас панă инçетрен,
Шевле сарри сапнă тўперен.

Сар хĕвел, сар хĕвел,
Çаврăнсам тепре!
Мерчен кайăк чĕппине
Парнеле пире.

Тăшмансем те пулнă чăвашсен,
Вилĕм вучĕ сапнă çич енчен.
Çиçĕмпе çунтарнă инçетрен,
Йывăр хурлăх тăкнă кунсерен.

Сар хĕвел, сар хĕвел,
Çаврăн ырлăха.
Парнеле çут хĕлхемне
Хура халăха.

Мерчен кайăк пулнă чăвашсен.
Тăшмансен эшкерĕсем килсен
Кайăк çул кăтартнă ирĕке.
Сирсе янă, теççĕ, инкеке.

Сар хĕвел, сар хĕвел,
Çаврăнсам тепре!
Мерчен кайăк халалне
Тавăрсам пире.

Кивĕ тĕрĕ-эрешсем çинче —
Манăçнă ўкерчĕк хушшинче
Халь те мерчен кайăк пурăнать,
Ирĕклĕх енне çул кăтартать.

Сар хĕвел, сар хĕвел,
Çаврăн ырлăха.
Парнеле çут хĕлхемне
Хура халăха.

## 8. Кукамай кӗпи

Кукамай ҫийӗнче ум тӗрриллӗ кӗпе.
Унашкал кӗпе ҫук пулӗ, тен, тӗнчипе.
Уявра ҫеҫ ӑна кукамай тӑхӑнать.
Урӑх чух ҫав кӗпе арчара упранать.
Кукамай кӗпене тӑхӑнать ӗмрипе
Асӑнмалӑх ӗҫтӑрӑм реликвийӗ пек.
Сӑлтавне пӗлеймен те эпир халиччен.
Тен, асра та, пилте те пулман ыттисен.
Паллӑ-чапла кунра е асра-тӗсрере
Кӑларсассӑн та вӑл ҫак асамлӑ пире,
Аллипе ачашлать, куҫӗпе чуп тӑвать,
Питӗ тимлӗн, хура тивесрен асӑрхать.

Эп кӗпе пахалап — кукамай шӑппланать:
Ун тӗрри — эрешне ҫыру евӗр вулать.
Аркинчи эрешне пуҫ тайса тинкерет,
Ҫаннинчи тӗррине куҫҫульпе йӗпетет.
Кукамай пӗр кана хускалмасӑр ларать,
Вӑл унтан ерипен хӑйпе хӑй сӑмахлать:
"Ҫак кӗпе тӗрринчи несӗлсемӗр ятне
Сӑмахпа асӑнаймӑпӑр ӗнтӗ тинех.
Ятсӑрсен чунӗсем, ишӗр сӗт кӳллинче —
Сӗт кӳлли варринчи ырӑсен ҫумӗнче.
Ан та асӑнӑр ҫеҫ нихӑҫан та пире,
Эпӗр ҫут тӗнчере асӑнатпӑр сире".

Эпӗ пӑхрӑм тытсах кукамай кӗпине.
Вӑхӑт тутӑхӗ ҫинӗ ун шурӑ тӗсне.
Сарӑхайнӑ арки, тӗксӗмленнӗ пирри,
Ҫипписем тӗссӗрленнӗ эрешлӗ тӗррин:
Йӑм хура тӗслисем кӗл пекех шуранка,
Хӗрлисем — шупкарах, хӑмӑрри те хушка.
Симӗс тӗс кӗрхи ҫулҫӑ пулса ӳкнӗ пуль.
Вӑхӑт ҫилӗ килсе вӗҫтерсе кайнӑ пуль.
Кӑвак тӗсӗн куҫне шур илтернӗ пулас...
Ҫӑлтӑр куҫ сӳннӗ пек — ун хӗлхемӗ чапрас.
Сар тӗсе илнӗ пуль ҫӳл тӳпе хӑй патне...
Кукӑр-макӑр йӗр ҫеҫ юлнӑ тӗрӗ ҫине.

Кукамай пăхнă пек тинкеретĕп тĕрре:
Пиктограмма палли пуçне уснă, йĕрет.
Курăнать çын мĕлки: тем каласшăн мана.
Тен истори пулса вăл чĕнет хăнана.
Тен, мана вăл пиллет: вĕрентсе ăс парать.
Тен, ятлать, тен, юрлать, тен, тата тем калать...
Мĕн каласшăн мана çак тăмхаллă çыру?
Ах анчах, чĕлхине ăнланмасть çĕн ăру.
Эп хăлхасăр иккен — илтес çук йыхравне,
Эп чĕлхесĕр иккен — хаклас çук илемне.
Эпĕ куççăр иккен çак хитре тĕнчере:
Вулама пĕлейместĕп асамлă тĕрре.

Тум тĕрри тупсăмне тин ăçтан-ха тупар.
Ваттисем вĕрентмен тенĕ май ал сулар.
Чим, тăхта, ырă çын, тăхтасам, вулакан,
Уйăх çĕнĕ паян, вăл тулать-çке кайран.
Çын ĕмри те шăвать уйăхпа пĕрешкел.
Пурнăçра шутлă кун катăлни питĕ шел.
Кашни çын ватăлать — иртме çук пўрнинчен.
Вăхăт çитĕ кĕçех (çул шăвать ерипен):
Ваттисем вĕрентмен теекен сив сăмах
Хамăра çаврăнса тивнĕ чух хыттăнах
Мĕн питпе тăмалла мăнуксен умĕнче?
Мĕн упратпăр эпир арчасен тĕпĕнче?

Авалхи тĕрĕсен, эрешсен тупсăмне
Кукамай та халь тин пĕлеймест пĕтĕмпех.
Кукамай юмаххи шăппăн çеç систерет:
Ăс-тăнне упрама чăваш тĕрĕ тĕрлет.
Тĕлĕнтермĕш хăват эрешре упранать,
Çав хăват чăваша пурăнма пулăшать.
Çав асамлă çыру паллине вулама
Ăсчахсен азбукки халиччен упранман.
Кукамай кĕпине эп сăнап пуç тайса,
Йĕнерлеп шухăша пуç тавра çаврăнса.
Тав турра, çыннăн пур чун-чĕре азбукки
Тата пур чĕркеленнĕ истори тĕрки.

Кукамай çийĕнчи шурă пир кĕпене
Куç илмесĕр сăнап, тинкереп çырăвне.
Куртăм виçĕ хĕвел — çитĕ ырă мехел:
Несĕлсен кун-çулне вулама тупăп мел.

Пĕр хĕвелĕ парать иртнĕ кун хăватне,
Варринчи сапалать паянхи çутине.
Юлашки сар хĕвел çутать теветкел —
Ĕçлеме сим хушать пушансассăн кушел.
Ыр мехел çитмеллех çырăва вулама,
Ваттисен йăлипе иртнине асăнма.
Несĕлсемĕр кăна канлĕн çывăрччăр-и?
Несĕлсемĕр пире ан та асăнччăр-и?

Кукамай çийĕнчи кив кĕпе тĕрринче
Пур çич тĕрĕ палли: тыткăчи — çут тĕнче.
Хĕресленнĕ йĕрсем — ырă пурнăç палли.
Вырăн пур киремет ыр-хаярĕ валли.
Хумлă йĕр — шыв унки, вичкĕнни — вут уки,
Хĕç-пăшал, ака пуçĕ, хăмла пултранки...
Несĕлсен йывăççи курăнать сарлака,
Кĕшĕлех çĕкленеть кив кĕпе тĕрринче,
Саланать сарă тĕс паллăсем хушшинче.
Ку ахаль тĕрĕ мар, ку вăл пурнăç тĕрри —
Çут çанталăкпала çураçулăх йĕрри.

Ум тĕрри пăхăнать тĕрĕсен саккунне:
Шайлашуллă ўкерчĕк уйлать илемне.
Ав, симметриллĕ йĕр — мăшăр ярăм ĕрет —
Мăшăр çутă тĕспе вырнаçулăх кўрет.
Кукамай питĕнче те пур пурнăç тĕрри —
Çут çанталăкпала çураçулăх йĕрри.
Ах анчах, кукамай питĕнчи паллăсем
(Куртăм эп ун çине тинкерсе пăхнăçем)
Пăхăнмаççĕ иккен тĕрĕсен саккунне,
Пĕр симметрисĕр йĕр çуркалать сăн-питне.
Тĕрĕсен саккунне пăхăнмасть шайлашу,
Самана саккунне сăнарлать ылмашу.

Уйрăм паллă уйлать шур кĕпе çаннине.
Вăл мана кăтартать авалхи çырăвне.
Çав çыру йĕркинче анлă çул юпленет:
Пĕр юппи — юн йыхравĕ, теприйĕ — инçет.
Ун хăрах çаннинче иртнĕ кун çути пур,
Çырура несĕлсен-тăвансен ячĕ пур.
Юнашар эп курап уйăхпа хĕвеле:
Каç пулсассăн кайсан та, ирпе килмелле...

Авă, тепĕр çанни. Ун çинче те çырни —
Шуçăм çăлтăрĕ евĕр илĕртекенни.
Кукамай шăлнăран куççульне çаннипе
Илĕртӳллĕ инçет сӳннĕ пуль тĕтрепе.

Шур кĕпе аркинче урăхла тĕрĕ пур,
Шур кĕпе аркинче çут мерчен кайăк пур:
Вăл аваллăх енчен вирхĕнет те килет,
Çамкаран шаккасах тем çинчен систерет.
Çунатне саркалать — Сарă Кун çухалать,
Çунатне хуçлатать — Сарă Кун таврăнать.
Çак çыру кăтартать кăк ама сăнарне.
Аркăпа йышăнать вăл çĕн кун кайăкне.
Ун кун-çулĕ иртет çул юппи витĕрех —
Пур ырри те усалĕ çак çут тĕнчере.
Çамкана çырнинчен пурпĕрех иртме çук,
Шур кĕпе аркипе хупланса юлма çук.

Çаврăм тикĕс эреш пур кĕпе аркинче.
Çĕр ама сăнарне куртăм çав йĕрсенче.
Ĕмĕр вилĕмсĕр чун шăпине вăл тататъ:
Çĕр ама тăпринчен çыннăн ӳчĕ пулать,
Шутлă кунĕ иртсен тăпранах таврăнать,
Чун вилмест — пурăнать, çĕн ӳтре чĕм шырать...
Пурăнать-мĕн этемлĕх çапла çураçса,
Çут тĕнче вăйĕпе пĕр чĕлхе шыраса.
Ĕмĕрсем хӳшши пухнă мухтавлă ăс-тăн
Картине йыхравлать илĕртӳллĕ çак сăн.
Картине çеç кĕни те сахал пулас çук —
Çут тĕнче пилĕнчен ытларах илме çук.

## 9

Кукамайăн киле каймалла.
Ун ялан тем те пĕр тумалла.
— Таврăнма ан васка, кукамай,
Каласа памалли пит нумай.

Кукамайăн килех каймалла.
Ун хуçалăх, килçурт тытмалла.
— Кукамай, ĕç нихçан пĕтес çук,
Çĕр выртсамччĕ пĕрре килнĕ чух.

Кукамай ӳкӗте кӗрес ҫук —
Хӑнара ҫӗр выртса тарас ҫук.
Пӑрӑва хӗрхенет — пахмалла,
Сурӑххи те путек тумалла.

Кукамай, кукамай! Кучченеҫӗ нумай.
Туллипе ҫеҫ килетӗн пӗрмай.
Кукамай, кукамай! Калаҫатӑн сӑпай,
Ыр тӑватӑн пурне те пӗрмай.

Кукамай хӑнаран кайнӑ кун
Ҫаврӑнать сар хӗвел те салхун.
Ватӑлма ан васка, кукамай,
Хӑнана эс татах килсе кай.

# КĂМАКА ĂСТИ

Поэма

"Язык первых людей был не языком
геометров, как обычно думают,
а языком поэтов..."

Ж. Ж.Руссо

## 1. УМ ÇАВРИ

Ыр сăмахна, философ, тавтапуç!
Çав сăмаха ĕненесех пулсан,
Поэт — ăсхакăл хирĕнчи çăлкуç.
Çынсем сăмах вĕреннĕ поэтран,
Поэт хисеплĕ пулнă аваллан.

Анчах та вăхăт çил пек вирхĕнет.
Е чул, е атом ĕмĕр анлăшне
Пĕр пек хăвăртлăхпа вĕçсе иртет.
Этем ăсне ярасшăн çил çине,
Хывăхĕнче тупасшăн тĕшшине.

Сăмах ăсти, философ, тавтапуç!
Халап-хыпар кайăкĕсен карти
"Кайри-мала" тесе тавлашнă чух
Чул ĕмĕрти чун çимĕçĕн ăсти
Сас пачĕ çĕнĕ ĕмĕре çити.

Чунтан эп ăмсанатăп, тупата,
Чул ĕмĕрти сунарçă-поэта:
Саманташсем тăнланă сăмахне,
Хăрхăмрисем хÿтернĕ хуйхине —
Поэт ертсе çÿренĕ çынсене.

Чул ĕмĕрĕн тĕллевĕ — ухута.
Кăвайт тавра ташланă чух унта
Хавас итленĕ пурте поэта.
Чеченлĕхрен сирмен-мĕн урăххи —
Асра пулман политика чĕлхи.

Паян политика — Çĕр кăвапи.
Патшалăх ĕçĕ — пĕтĕм çын шăпи.
Пур пĕтĕм çын — политик йышĕнче,
Пур пĕтĕм çын — философ шайĕнче.
Поэт ăçта? Тăмасть-и айккинче?

Политика çăварĕ — чăн хапха.
Эй, турă, ĕненсен пур сăмаха,
Ăсчах тухма пултарĕ хураха,
Философ сӳтĕ чĕлхипе çăмха,
Поэчĕсем иленĕç хупаха.

Политика чĕртет кăмакине.
Кăвайт хĕрӳн шатăртатса çунать.
Вутти чакмасть ун, хушăнсах тăрать, —
Чун çимĕçĕн капмар йывăççине
Касать пурттийĕ ун çине-çине.

Ырра-ши, усала-ши — кам пĕлет?
Тĕнче ăсне ял-йышăм тĕрĕслет,
Тĕнче ĕçне ял-йыш мухтать-тиркет.
Политика пăтти кăна пиçет,
Политика пăтти ял-йыш çиет.

Мĕнрен тăрать политика пăтти?
Çук çу-кĕрпе ун, çук аш-пăш тути.
Ăша ярсассăн, сисĕнмĕ ырри.
Хĕрӳ вутра сиксе чĕтрет вĕри.
Пăтти çеç мар, тĕнче пиçет мар-и.

Мĕнпе пиçет политика пăтти?
Çын шăпинчен тăрать кăвайт вутти.
Яваплăх çак ĕçре пин хут ӳсет —
Ăспа тавлашмалла ăсчахсемпе,
Чунпа танлашмалла поэтсемпе.

Паян политика чĕлхи малта.
Поэт сасси хăюсăррăн, шалта
Аран илтĕнкелет унта-кунта.
Чунтан эп ăмсанатăп çавăнпа.
Чул ĕмĕрти ертӳçĕ поэта.

## 2. КĂМАКА ЯШУРККИ

Урамрах чăвашла шăкăл-шăкăл туса,
Вăтанмасăр чăваш пулнинчен,
Ачасем чăвашлах калаçса-савăнса
Çӳрекен чăваш ен ялĕнчен
Çула тухрĕ пĕр çын, кутамккаллă арçын,
Ярăнса пысăк утăмсемпе.
Ял çинчи ятлă çын (вăл илмен пысăк чин)
Çул çӳрет чи таса тĕллевпе.

Ăнсăртран урамра тĕл пулсассăн çынна,
Шыв пек юхĕ халап е юмах.
Ял йытти-кушакки те паллать-тĕр ăна...
Чарăнса калаçатăп хамах:
— Яшуркка, эс ăçтан таврăнатăн паян?
Ăçталла йыхравлаççĕ тата?
— Ху пĕлен, таврăнап кукăль пиçнĕ çуртран,
Йыхрав пур кăмакасăр çурта.

— Çамрăк мар хăв, çапах аптрамастăн пулас,
Аларан пăрахмастăн тăхçа.*
— Кăмака шучĕпе эп шутлатăп çула —
Çирĕмрен те иртмен-ха кăçал.
Ĕлĕкрех — хĕрĕхре — хĕрĕхшер кăмакан
Мăрйине эп кăларнă çуллен.
Шел, кайран ялсенче çĕнĕ çурт лартакан
Сахалланчĕ... Çукрах чĕнекен.

Хĕрĕх çул — хĕнлĕ çул пулчĕ манăн ята.
Хĕрĕххрех çӳç шуралчĕ, чăнах.
Хăшĕсем тăшманла тинкеретчĕç ялта,
Эп çула тухнине курсанах.
Хăшĕсем хĕрхенсе сăмахлатчĕç тата —
Чун тени пăнтăхман-ха йăлтах.

Халăхпа ĕç патне хутшăнмасть вăл, тесе,
Такамсем çăхавсем янăран,
Района, ĕçтăвком кантурне чĕнтерсе,
Айăплав хучĕсем çырнăран,

---

* Тăхçа — чул катмалли мăлатук, мăка пуртă.

Ятăма вараларĕç (шел мар пысăк штраф)
Çак ĕçпе тунă чух суд пекки.
Кантурти ятăм юлчĕ Шабашник Якрав,
Ял çинче — Кăмака Яшуркки.

Кăмака кӳмине эп виç кун çавăрман.
Талăк çурă — мăрье тухнă, ав.
Ĕç вĕçленнĕ ятпа ĕçкĕпе алхасман,
Манăн пур тата тепĕр йыхрав.
Кăмака Яшуркки чарăнать калама —
Чун кӳтни иртрĕ ун калаçса.
Куçĕсем те пĕлеççĕ пуль витĕр курма —
Шухăша вăл ăнланчĕ пăхса.

— Эсĕ ху ăçталла — калаçма çынсемпе?..
— Кукамай юррине суйлама.
— Э, чухлатăп. Тур пулăштăр чун çутипе
Кĕл çинче çут мерчен шырама.
— Кăмăлу пур пулсассăн, атя йĕркипе
Итлемешкĕн тăхçа юррине.
— Яшуркка, хатĕр эп astивме кунĕпе
Кăмакаçă шăпин юррине.

## 3. ПĔРРЕМĔШ КИРПĔЧ ÇАВРИ

Кирпĕч тытрĕ кăмака ăсти.
Çилĕм пек тăм сĕрчĕ мастерокĕ
Кирпĕч çумне кирпĕч хурасси,
Ăс-тăна ĕçре сĕм хушасси
Маншăн, çамрăк çыншăн, чăн урок-çке.

Эпĕ хатĕр тăтăм пулăшма.
Кăмакаçă хатĕр калаçма.
Калаçсан та вăл ĕçне ăнтарĕ.
Мастерокĕ шăлнă чух тăма.
Сивĕ чулсене те ачашларĕ.

Шăлнă чух вăл çилĕм пек тăма
Сив чулпа пĕлет юмахлама.
Ăш сăмахшăн кам çынна кӳренĕ...
Эпĕ те ăшпиллĕн калаçма
Яшуркка ăстаçăран вĕренĕп.

Вăй хумасăр çук-мĕн ĕç тума,
Пуринчен те йывăр пуçăнма.
Ĕç тени майне пĕлсен ĕнет-çке...
Ăраскалăмпа чĕлхе тупма
Яшуркка ăстаçăран вĕренĕп.

* * *

"Сăмах, тет, пулнă тĕнчере малтан", —
Чи аслă кĕнеке çинче вулан.
Эп çав кĕнекепе туслах пулман та,
Яшурккана сăна-сăна ăнлантăм:
Сăмах пулсассăн пуринчен малтан,
Этем пирвай калаçнă чулпалан.

Чĕрре кĕме пултарĕ вулакан —
Ку тăхçапа чулсем кăна ватман.
Ăстаçă аллине лексен чулсем те
Юрла пуçларĕç кĕвĕллĕн, илемлĕн.
Тĕнчемĕрте сăмах кăна пулман,
Тăхçа юрри янранă пуль малтан.

Ăстаçă аллинче тăхçа юрлать,
Сив чулăн кăмăлне те вăл уçать.
Чул сассипе пĕр килчĕ чун апачĕ —
Чĕрем тулли хавхалану вăранчĕ.
...Чул чĕлхине пĕлен ăстасенчен, тен,
Этемлĕх янкăс юрлама вĕреннĕ.

Ăстаçă аллинче тăхçа ташлать.
Лара-тăра пĕлмест пăрчăканла.
Чул ĕретне тӳрлетрĕ чун апачĕ,
Ĕç шавĕпе пĕрле ташларĕ ячĕ.
...Чул ташшине пĕлен ăстасенчен, тен,
Этемлĕх тикĕс ташлама вĕреннĕ.

# 4. ТĂХÇА ЮРРИ

Ăста алра
Лара-тăра
Пĕлместĕп эп,
Ĕçлеп, ĕçлеп...

Мĕн-ма хĕнес
Сив чулсене?
Ма тĕпретес
Кирпĕчсене?

Чул тăвăп эп
Сив чулсене —
Вырнаçĕç шеп
Ĕретсене.

Çул хыççăн çул
Шыв юхнă пуль.
Чул хыççăн чул.
Çын ӳснĕ пуль.

Чул тытнă çын —
Тĕнче хуçи.
Ун пур чул мар,
Ăс-тăн уççи.

Чул тытнă çын —
Вăл ĕнтĕ ÇЫН.
Ун пурте пур —
Ун çурт та пур.

Чул тытнă çын —
Вăл ĕнтĕ ÇЫН:
Ташши те пур,
Юрри те пур.

Чул хаклă мул.
Ун çук хисеп.
Чăн-чăн хакне
Пĕлетĕп эп.

Тăхçа текен
Мăлатука
Йăл илекен —
Юлман çука.

Ăста алра
Лара-тăра
Пĕлместĕп эп,
Ĕçлеп, ĕçлеп.

## 5. ЧУН АХРĂМĔ

Ăстаçă тăхçине вылятрĕ меллĕн.
Вырнаçрĕ кирпĕч ĕрете йĕркеллĕн.
Чулра — малаш.
Ăна тытсан алла
Тискер упĕтерен çын пулнă, тет.
...Куçран аваллăх сĕмĕ тинкерет.

Асрах кив кĕнеке çинчи ўкерчĕк:
Çурма тискер çын ушкăнĕ ўкерчĕ
Пĕр мамонта мăн чулсемпе çапса.
Эшкер ахăрашать
Пĕр çын çеç чĕмсĕр.
Шăлать куçне чĕркуçленсе ларса.
...Чул ĕмĕрĕ иртмен-тĕр поэтсемсĕр.

Йĕрет тискер этем — ку хăй пĕр сăвă.
Чул ĕмĕрти поэт чунне пит тăвăр.
Вăл каçару ыйтать пуль мамонтран.
Историе куççуль улăштарман.
Шăпа шырлан-им, сикĕн те — каçаймăн.
Куççуль те хырăма тăрантараймĕ.

Сăвăсемпе чунне пусарнăран-тăр,
Пĕтсен те мамонтсем, поэт упраннă.
Катмак çĕкленĕ çирĕп аллине.
Чулсем çине вăл сăвă-юрă варнă.
Çыру тĕрриллĕ пурнăç йĕррине
Несĕлĕмсем чулсем çине хăварнă.

Истори ĕсĕклет — ку хăй пĕр сăвă.
Пăтрашури поэт чунне пит тăвăр.
Пăтрашура кăвайт ҫути пулса,
Чечен чĕри те кайнă шăранса.
Ыратăва чулпа пусарнăран-тăр,
Чул айĕнче чун ахрăмĕ упраннă.

* * *

Тăхҫа каллех ачашшăн та именчĕк
Чула чуп турĕ кĕтесрен кăштах.
Хавшанă чул арканчĕ ҫавăнтах.
Чул арканнишĕн Яшуркка эрленчĕ —
Чул ĕмĕрти поэт пек чĕркуҫленчĕ,
Чул чĕлхипе каларĕ ăш сăмах.

Ăнман ĕҫ-пуҫ ҫын чун-чĕришĕн тăвăр.
Ăстаҫă эрленни — хăех пĕр сăвă.
Вăл каҫару ыйтать пулас чулран.
Чул тикĕс юрласан, канать пуль чунĕ.
Иртет кун-ҫул — вăй-халĕ чакĕ унăн.
Ыр ĕҫĕ ăшăтĕ ҫынна кайран.

## 6. КУҪҪУЛЬ ТУМЛАНĂ КИРПĔЧ ҪАВРИСЕМ

Аваллăхран вăратрĕ Яшуркка.
— Хыҫал енне тăвар-ха пăчăркка.
Хĕртсурт валли те кирлĕ пулĕ вырăн.
Ҫурта упратăр шуйттанран каҫ-ирĕн.

Атте ҫуртне хĕртсурт та упраймарĕ.
Пăтранчĕ самани те пит вăрах.
Шуйттанĕ пирĕн "тура" пулчĕ мар-и —
Шăпланчĕ Яшуркка. Унтан вара:

* * *

— Пąян та асăмрах — шкултан эп таврăнаттăм.
Тукас урамĕ. Тăлах Тарьесен хапхи.
Унта пĕр тăрантаслă урхамах тăратчĕ.
Тăватă-пилĕк ҫын шавлатчĕҫ тем пирки.

Пĕри — атте. Катаранах ăна палларăм.
Тепри, ав — ГЭС Йăванĕ — "çвет" параканни.
Монтер вăл, çÿллĕскер. Пиçиххинчен çаклатнă
Юпа çине хăпармалли "упа чĕрни".

Ял çыннисем ăна курсан хăш чух шÿтлетчĕç:
"Йăван тени çын мар, юпа çинчи монтер".
Хăшсем: "Монтер сăпайлă, ырă çын-çке", — тетчĕç.
Йăван халь такама ятлать асар-писер.

— Хурах пек сăвакан качаканах ан илĕр,
Патшалăха какай парса татман тесе.
Вĕт-шакăр ачасем Тарьен тăваттă-пиллĕк —
Патшалăха та кÿрĕç усă çитĕнсен.

Атте те хыттăн такама вăрçса калаçрĕ...
Тăмарăм итлесе, чуптартăм хашкаса.
Ах, пирĕн те пĕртен-пĕр качака кăна-çке.
Çавна илсе тухман-ши, тетĕп, çавăтса.

Инкекĕ халлĕхе юнашартан çеç иртнĕ.
Ав, шельма качаки, лупас çине туртать.
Аннеçĕм лăплантарчĕ:
— Парăм çук-ха пирĕн.
Чĕре сурилĕх çимелли те тупăнать.

Кĕр кунĕ пит кĕске-çке — тĕттĕмленчĕ хăвăрт.
Пÿртре "Ильич лампи" куçа йăмăхтарать.
Урок тума ларсан, кил-йыш та пулчĕ шăпăрт...
Анчах кĕç сÿнчĕ "çвет" — пăч-тĕттĕм таврара.

Пăхатăп урама — пĕр çутă та курмастăп.
Хура хĕвел хуплана тейĕн тĕнчене.
Ун пилсĕр хăрăмне часрах çуса ярасшăн
Сив çиллĕ çумăр çапăнать чÿречене.

...Хĕрÿллĕ патаксем çырса эп шăрçаларăм
Тетрадь çине кайран, мĕлтлетнĕ чух "чĕпкуç".
Букварĕн тепĕр листине уçса вуларăм:
"Аттемĕр Сталин — çут хĕвелĕмĕр, çулпуç".

Çĕрле шартах сиксе вăрантăм — тем шавлаççĕ.
Анне шари йĕрет. Вăл ÿкнĕ урайне.

— Аҫупала ГЭС Йăванне тытса каяççĕ
Хăямата пулас е вилĕм шăтăкне.

* * *

Анне ширанă тĕрĕслĕх, анчах
Вăл ҫак ĕҫпе ҫыхланнă кăлăхах.
Шыранă тĕрĕслĕх — ҫухалнă хăй.
Нуша мана хыптарнă ĕмкĕч-сăй.

Ҫĕрпе кун ылмашать, хĕвел тухать...
Кустарнă май хĕвел урапине
Ылханлă самана мана лартать
Кăварлă кăмака чĕрҫи ҫине.

* * *

Кам пулнă ялта пуринчен выҫăрах?
Эп, халăх тăшманĕн ачи.
Кам пирĕн ялта илтеймен ăш сăмах?
Эп, халăх тăшманĕн ачи.

Ҫапла эпĕ ӳснĕ айван та кӳренчĕк.
Ҫавах ĕмĕтленнĕ ырра.
Мана кăмака тăвакан ҫын хĕрхенчĕ,
Хăйпе пĕрле илчĕ вара.

Асамҫăччĕ маншăн вăл, кăмăл сиплешĕ.
Вĕрентрĕ мана ҫак ĕҫе.
Ах, мĕншĕн ыр ҫыннăн кун-ҫул кĕске-ши?
Турри шутлă кун валеҫет.

Амак — хаяр чир — туртса илчĕ юратнă
Пĕртен-пĕр чи хаклă ҫынна.
Турри те хăр-тăлăх-ши тăлăх туратăн?
Ҫитмерĕ хăвачĕ мана.

* * *

Тĕнче питĕ тутă та ... выҫă.
Вăл тутă атте пур чухне.
Ăна урлă-тăрăх та виҫрĕм —
Памарĕ мана ҫӳрмине.

Тĕнче питĕ ырă та ... чунсăр.
Вăл ырă атте пур чухне.
Куççуль юхтарни пулчĕ уссăр —
Илтмерĕм ачаш сăмахне.

Тĕнче питĕ аслă та ... тăвăр.
Вăл аслă, пулсан ăраскал.
Ăна тăвăрлатрĕç пит хăвăрт
Хӳме, тимĕр алăк, хурал.

Саккун самантрах татса пачĕ
Сулланчăк ача шăпине.
Кăтартрĕ нуша саламачĕ
Виç вĕçлĕ тăхлан чĕлхине.

* * *

Сулланчăк-"бродягăн" "тăван кĕтес" пур.
Вăрман варринче вăл, çулне пĕлĕ мур.
Ун адресĕ: Çĕпĕр... çав номерлĕ ял.
Пур йĕплĕ карта, пур пăшаллă хурал.

Сулланчăк-"бродягăн" халь пур "тăван кил".
Атте çурчĕ мар та, хысна панă пил.
Хĕртсурт çав çуртра кĕнчеле арламан,
Турри ас илмен ун çинчен нихăçан.

* * *

Саманине кура çул урхамахĕ
Тапса туртать е чăхăмлать чакса.
Кун юрттине чараймĕ çул тумхахĕ.
Нуша кулачине куççуль сапса,
Иртес куна килес кунпа сыпса,
Çын ĕмĕрĕ те шăвăнать вăраххăн.

## 7. ВУЧАХ УМ ÇАВРИ

Вăхăт — кăмака кӳми çавăрмалла.
Кăмакаçă тăратать çур кăшăла
Пĕр енчен тирпейлĕн катнă чулсене.
Ялкăштăр хĕрӳн вучахĕ малашне.

Кирпĕч çумне кирпĕч — ĕçĕн хăй йĕрки.
Вучах ум хуран çакмашкăн пулĕ янтă.
Ĕмĕр çумне ĕмĕр хушăннă пирки
Вăхăт кăмаки — истори — купаланнă.

Ашшĕ ывăлне пехиллесен ĕçне,
Ĕмĕрсен çыхăнăвне те сыпăнтарĕ.
Пĕр ăру ăнланмасассăн тепĕрне,
Вăхăт кăмаки йўç тĕтĕм çеç кăларĕ.

Ĕççынни — истори кăмакин вутти —
Кăварланнă тĕлкĕшсе вутра вăраххăн.
Тура-этемсен катмакĕпе пуртти
Вучаха пиншер çын шăпине пăрахнă.

Ахăрсамана кама тăм савăтпа
Сĕннĕ евĕклĕн чĕп-чĕрĕ юн ĕçмешкĕн.
Е кама сăйланă вăл саламатпа,
Чул айне чунне хĕстернĕ нишленмешкĕн.

Ахăрсамана историе çапла
Пысăк чул айне хурайнă та хĕстернĕ.
Вăхăт çавраçилĕ çаврăннă калла —
Ахăрсамана чулне тĕртсе ўкернĕ.

Хăнăхсассăн, тамăкра та çын пурнать.
Тамăкра та ÇЫНăн çынлăхĕ упранĕ.
Ахăрсамана иртсессĕн те, сурать.
Ĕмĕрхи историн юнăхнă суранĕ.

Вăхăт тинĕсĕн çыранĕ — самана.
Чул çинче те ешерет кун-çул ыранĕ.
Чун пулсан, чул айĕнче те çын çынах.
...Ах, историн çеç тўрленес çук суранĕ.

* * *

Халь тĕрĕслĕх çўрет çĕр чĕтретсе,
Пурне те тинкерет иккĕленсе.
Çилленчĕклĕн çўрет килтен-киле.
Пĕрле çўрет истори тиекле.

Истори куçĕ питĕ вичкĕн çав:
Пин çул калла, пин çул мала пăхать.

Анчах та пăтрашу çěклет шăв-шав —
Кун-çул кусне тусан витсе хурать.

Пěр тапхăр çав пăтрашăва сăнар.
Вăл çутă та асамлă тěкěр мар.
Анчах шăлсассăн манăç тусанне,
Курма пулать иккен этем чунне.

Камит кăтартнă пек пěри кумать,
Пăтрашура нухрат çути шырать.
Тепри ěнентерет: вăл çеç ăсчах —
Тěтрелěхре усман çěрсем пайтах.

Шаккаççě ыттисем шăлěсене,
Тытаççě выçă кашкăр йăлине.
Асав шăлсем асаççě тěттěмре,
Асавсăрри ларать чěтре-чěтре.

Хăшсемшěн пурпěрех: е ир, е каç.
Çимелěх пур пулсан, чипер кун каç.
Мěн-ма ахаль кăна асапланас?
Турри парсан, çиес те çывăрас.

Халь тěрěслěх çурет йěре-йěре,
Ыталаса йěрет историе:
Ан тěкěн ěмěрхи сурансене!
Çěнни сиплеймě кивě ěмěре.

## 8. ЯТСĂР ÇАВРА

— Çирěм йěрке питě меллěн вырнаçрě.
Мăшăр аллу, Яшуркка, пит вăр-вар.
— Кирпěч ретне номерпе палăртасшăн?..
Çук, çамрăк çыннăм, вěсем ятсăр мар.

Ячě вěсен питě селěм: ав, пичě,
Умě, çамки пур. Çăварě, чěрçи...
Çын евěрех кăмака кулепийě.
Вăл — пурт ăшши те ыр кăмăл арчи.

Çын евěрех кăмака кулепийě.
Чи хапăл ěç — вучах ум тăвасси.

Çак вучахра çунас çук çын шăпийĕ.
Ăш кăмакашăн пулман-ха асси.

Кирпĕч тĕшне те тăман çын кун-çулĕ
Типнĕ пайтах Çĕпĕр çĕрĕ çинче.
Эх, çынсене номерленĕ те... Çулĕ
Выртнă тăван тăрăхран пит инçе.

Çук: çынсене кăна мар номерленĕ,
Пулнă пайтах номерленĕ япсем.
Пур номере те пĕр ят тĕвĕленĕ:
Ярлăкĕ — "халăх тăшманĕ" вĕсем.

## 9. МĂРЬЕ ÇАВРИ

— Кăмака — кил-çурт ăшши,
Кăмака — кун-çул ташши.
Кăмака пулсан аван,
Перекетлĕ пурăнан.

Мĕн чул вутă çуннине
Кăмака калать хĕрсе.
Мĕн чул тĕтĕм тухнине
Пӳрт мăрйи калать йĕрсе.

Кăмака кирпĕчĕсем —
Ăшă çăтаканнисем,
Пӳрт мăрйин кирпĕчĕсем —
Хăрăм сураканнисем.

Пӳрт ăшши раскалсăр мар,
Кил хуçи курать сăвап.
Ырлăх та йӳçексĕр мар,
Пӳрт мăрйи тытать явап.

Тутлă кукăль шăршипе
Кăмака ани тулать.
Юрлă çумăр ташшипе
Пӳрт мăрйи вара ванать.

Çавăнпа та мăрьене
Çирĕп кирпĕчрен тăвар, —

Яшуркка пӳрт тăррине
Хăпарса каять вăр-вар.

## 10. СĔРĔМЛĔ ÇИРĔМ ЙĔРКЕ

Пĕр ывăç вут çаппи çĕклерĕм кĕтĕм.
Кăвайт чĕртсе пăхап кăмакана.
Кăвайт сиксе çунать — тухмарĕ тĕтĕм.
...Капланчĕ шухăш — сĕрĕмлĕ çавра.

Эх, самана! Эс кăмака ани пек
Пиншер çынна çунтартăн-çке вутра.
Ун йӳçĕ тĕтĕмне çăтаканни те
Терт курна çумăрпа шартламара.

Эх, самана! Эс — кăмака çăварĕ.
Ниш хывнă* пек çын хывнă чух пайтах
Ниш тухманниййĕн чунĕ тухнă мар-и.
"Çылăхлине" те йышăннă çăтмах.

Эх, Яшуркка! Çак кăмака мăрйи пек
Аçун синкерлĕ шăпине пула
Нумай терт куртăн: шăрăх, типĕ
Е пăрлă тăвăл пӳлнĕ сан çула.

Эх, Яшуркка! Чул ĕмĕрти поэт пек
Чунна пусартăн чул шакка-шакка.
Сăвву-юрру сан — кăмака. Пĕлетĕп.
Сан пурнăçу та — ăшă кăмака.

## 11. КĂМАКА ПАРНИ

— Эй, кил хуçи! Кăмака хуçи!
Чĕнтĕрлĕ тĕрĕ тупас пулать,
Кăмака парни çакас пулать.
Кăмака хĕрӳ, ай, пултăр-и,
Вутă перекечĕ, ай пултăр-и.
Парнӳне çаксам юрла-юрла,
Парнӳне çаксам ташла-ташла.

---

* Ниш хывни — ĕлĕк чирлĕ ачасене сыватас тĕллевпе ăшă кăмакана хывнине çапла каланă.

Эй, кил хуҫи! Кăмака хуҫи!
Кăмака ҫамкин кăвак тенки*
Кăмака-айне, ай пултăр-и.
Кашта ҫинчи кăмака парни
Кăмăл ытамĕ, ай пултăр-и.
Парнӳне ҫаксам юрла-юрла,
Парнӳне ҫаксам ташла-ташла.

Эй, кил хуҫи! Кăмака хуҫи!
Хуплу-кукăль пĕҫерес пулать,
Пире хăна тăвасах пулать.
Вутти ҫунтăр-и шатăртатса,
Хуплу пиҫтĕр-и ҫатăртатса.
Хаклă та парне — хире-хирĕҫ.
Кăмаки пултăр хакне тивĕҫ.

## 12. ЮЛАШКИ ҪАВРА

Хуллен ярăнса пысăк утăмсемпе,
Каллех ҫула тухрĕ эпир пĕлнĕ ҫын.
Ялти ятлă ҫын вăл (ыр ят — пысăк чин),
Ҫынна ыр тăвать чун-чĕри хушнипе.

Вăл сив чулсене ҫеҫ шаккать ĕмрипе,
Ҫапах кил ăшши ăсталать аллипе.
Вăл пулнă ҫуртра тĕтĕм-сĕрĕм тухман,
Сӳнмен вучаххи ун, Хĕртсурчĕ тарман.

Вăл пулнă ҫуртра тĕтĕм-сĕрĕм тухман,
Апла ял-йышра ырă ячĕ кайман.
Вăй-халĕ чаксан, ҫын ĕҫе пăрахсан,
Пĕлетĕп: ăна ĕҫ пăрахмĕ нихҫан.

* * *

...Чул ĕмĕрти ертӳҫĕ поэта эп
Пит ăмсанаттăмччĕ ĕнер кăна.
Ҫĕкленчĕ кăмака — пуҫа халь тайăп:
Тавтапуҫах ăста Яшурккана.

---

* Кăмакана ҫамкин кăвак тенки — сĕрĕм (тупмалли юмах).

Çын кăмăлĕ — улшăнакан çанталăк.
Мĕскершĕн кăмăл улшăнайрĕ-ши?
Шакмаклă шухăш çыххинче — пĕр талăк —
Чун ăшшипе политика хушши.

Шакмаклă шухăш çыххинче — чĕр тамăк —
Ылханлă ахăрсамана "ырри".
Политика — улшăнакан çанталăк.
Анчах та унăн урăхла турри.

Ĕç ăстине ĕç пăрахмасть пулсассăн,
Политика чĕртет кăмакине.
Кам çылăхлă е çылăхсăр — пăхмасть вăл,
Тытса переть политика вутне.

Политика ĕçне ăстаçă хутшăнмасăр,
Ертÿçĕ мар чун çимĕçĕн ăсти.
Ўсеймĕ йывăç та турат хушмасăр
Паянлăхран малашлăха çити.

Политика ăста çынна мансассăн,
Чул хушшине юлать тăхçа юрри.
Политика тÿри ăста пулсассăн,
Çырлахатех политика турри.

Ĕç хăватне эп çавăнпа ĕненĕп —
Ĕçре чăн-чăн ăста пулас килет.
Ăсталăха алла илес текенĕн
Чун-чĕрипе пулас пулать поэт.

# ÇĂКА ПАЛĂКĔ

Çăка — лаштра вăрманăн пархатарĕ.
Хăй нихăçан та пархатар курман.
Пĕлмен вăл ăраскал мĕнне, мăнтарăн,
Асаплă этеме ыр тунăран.

Ўсет-çке вăрманта тем тĕрлĕ йывăç.
Çăка вара темме ăраснарах:
Ăста этемшĕн пуринчен те çывăх,
Пур йывăçран та пархатарлăрах.

Куллен сайралнă вăрманта çăкалăх,
Мĕн ўснĕ пеккине йăлт каснăран.
Сахал-и кирлĕ пушăт çăпаталăх,
Чăпталăх курăсне сахал туман.

Çăпатасем тумхах çулпа танкканă
Тĕнче хĕрне çитмелех çитмĕл хут.
Пасарсене çĕклем-çеклемĕн аннă:
Ытлашшине йўнеçтермелĕх сут.

Ĕçчен çынна пуçтах тăшман асса-и
Е ăмсанса пĕтерне таптаса.
Çăкалăха та шĕл-кавар асавĕ
Пайтах кăшланă — янă çунтарса.

Чăтăмлисем вилсен те чĕрĕ юлĕç...
Вута çĕнтерĕ хирĕç янă вут:
Вирт кайнă вырăнта халь симĕç çулăм —
Çăка хунавĕ ўснĕ тепĕр хут.

Каллех ăстаçă пилĕкне çăк авнă.
Яштак, хитре кĕлеткине хуçса.
Йытта парас хаяр чĕлхе çăхавĕ
Хăш чух илсен те хыттăн кăшласа.

Çăка — лаштра вăрманăн пархатарĕ.
Çăка пулсан, вăрман та чухăн мар.
Çут тĕнчене вăл килнĕ пуль, мăнтарăн,
Ĕç çыннине памашкăн пархатар.

Çынсен чуралăхри чунне те уçнă
Таса сăваплăх йывăçĕ — çăка.
Унран çынсем туй çăпати те хуçнă
Е тунă хупĕнчен хитре сăпка.

Çипрен çакланнă пурнăç татăлас пек...
Çиппе ылмашрĕ çăпата кантри.
Сиктĕрмерен çыхса йăлмакласассăн,
Янрарĕ çĕнĕрен сăпка юрри.

Синкерлĕ вăхăт ерипен çухалĕ.
Çӳрет вăл уйăх евĕр çаврăнса.
Вăл ачанне те хушнă чун хавалĕ,
Тетте-пушăтпала хăпартланса.

Ӳркенменни çынна çитме пултарнă —
Туяннă тăрантас чăпта чапсах.
Çăкалăха ăстаçăсем уттарнă.
Ăста пулан ӳркенмесен анчах.

Шыва çăка витрепеле çӳренĕ
Сăмах шĕкĕлчемешкĕн арăмсем.
Тупра шăп хĕрĕх пăт, тет, хатĕрленĕ
Çăка çӳпçи ăшне ĕçчен хĕрсем.

Çăкаранах чĕрес те ăсталанă,
Пылне тултараканĕ те çăка.
Хăнасене пыл-сăрапа сайланă
Алран кайма пĕлмен çăка курка.

Йăлмаклă тĕвĕпе çыхать çăкалăх
Историпе этем ăраскалне.
Çăка çинчен ан мантăр, тетĕп, халăх,
Мансассăн та çăка çăпатине.

Упрать çăка асамлă ыр хăватăн —
Ама туррин таса сăваплăхне.
Ахальтенех çынсем танлаштарман-тăр
Çак йывăçпа хĕрарăм сăнарне.

Арçын килçурт кĕтессине тытать-мĕн,
Хĕрарăм — унăн виçĕ кĕтесне.
Çăка йывăççинчен илсе тăрать, тен,
Хĕрарăм хăйĕн чăтăм хăватне.

Çăка, юман пек çирĕп йывăç мар та,
Çĕр амаран илет асамлăхне.
Вилсен те асăну юпийĕ лартнă
Унран хĕрарăмăн тăпри çине.

Капмар юман вăрмансенче хăрать, ав,
Ӳсет вăрманăн пĕр кĕтессинче.
Çăка — чĕп-чĕрĕ, сывă пурăнать-ха...
Вăрман шăпи — çăка хунавĕнче.

Çăка паян та тарăннăн сывлать-çке
Ама туррин сăваплă сывлăшне.
Таса çынсен — çав сывлăшра хăвачĕ,
Сиплетĕр çылăхли те хăй чунне.

Эй, вилĕмсĕрлĕх палăкĕ — АМАЛĂХ!
Çăка пулса эс пурăн ĕмĕре.
Эс чĕрĕлĕх палли, эс чĕрĕ палăк.
Çăка пурришĕн çут тĕнче хитре!

# АЧА ЧӲКЛЕВĔ

Поэма

## 1. ЫРĂ ХЫПАР

Шумер! Чĕрех-и эс е янрататăн ахрăм?
Чанне çапаççĕ, ав, тукмак хуçăласла.
Кутемĕн çылăха кĕрес килмест пачах та
Аваллăх туррине пуç хĕрлĕ тăратса.

Шумер, сана туятăп: ма сывлатăн ассăн?
Эс хăш туни хум·ячĕ Атăл çыранне.
Аваллăх туррисен канăçлăхне пăсмасăр
Эп ыр хыпар каласшăн чĕррисен ятне.

Çак хыпара Вавилона та çитересчĕ...
Мехел çитмен уçма ун вăрттăн сăлăпне.
Çырлахакан — çырлахтăр: кашнинех кĕртмеççĕ
Алтарь пек аслă та сăваплă тĕнчене.

Шумер! Элладăна та систерсе каласчĕ:
Чăваш ачи — "çĕн кайăк" — килнĕ тĕнчене!
Ян кĕвĕ саслăн, Орфейпа вăл ăмăртас пек,
Пурне те йыхăрать илемлĕх пахчине.

Аваллăх самани! Каçар пире, тархасшăн,
Вăратнăран чĕнсе çак чӳклеме ятне.
Хаваслă хыпара çăвар туллин каласчĕ,
Кĕрсе этемлĕх генофончĕн керменне.

...Чăваш ачи пулинччĕ çивĕч ăслă-пуçлă —
Кăвапине те каснă çивĕч çĕçĕпе.
— Кунта эп! — сасă пачĕ "çĕнĕ кайăк" уççăн.
Вăл килчĕ тĕнчене хитре çуркуннепе.

## 2. АЧА ПАРНИ

Эй, ҫӗн чăваш ачи, парне парса пуҫ тайăп.
Парнелӗх пултăр чун апачӗ — тӳр пани.
Халь ода ҫырăннишӗн поэтра ҫук айăп —
Мухтавлă одăнах савать-ҫке самани.

Эй, ода самани! Юрру пылак, ӗлккен те...
Сăпка юрри пур чух сан шăпланмах тивет.
Ҫӗрсем-шывсем ҫинче хуҫа пек ҫӳрекенӗн
Ахаль "ача тарҫи" пулма та тӳр килет.

Уяв тесе йыхрав парать чăваш сăрнайӗ,
Ҫак тӗнчене "ҫӗн кайăк" килнӗ май.
Ăна чарса сăмах каларӗ сарă кайăк:
"Вăл ӗнтӗ кайăкпа пӗр тан праваллă мар".

Ҫак йӳтӗмпе хӗрӳн янрать чăваш сăрнайӗ,
Тӗлӗнтерсе этемсемпе турăсене.
Вăрман та улăх ҫаврăм турă кӗвӗ майăн,
Ташша чӗнсе ҫак "ода сачӗн кайăкне".

Кăвак хуппи ҫеҫ уҫăлмарӗ кӗвӗ майăн.
Чăваш ачийӗ хăйшӗн хăй туртать шăпа.
Пӗлет вăл: ҫут тӗнче маччи тытса тăраймӗ
Пылак йăпăлтату кăпăкӗнчи чапа.

Эй, ода самани! Сана чăваш каҫарӗ.
Ҫак халăх мултан мар, ыр кăмăлтан пуян.
Паян та унăн тин кăна ҫуралнă арӗ
Хӗве чул пытарса ҫут тӗнчене тухман.

Хут ӗмӗрӗн хыпар-хăнар "потопӗ" юхрӗ.
Хыпар хумӗсенче шух парăс вӗлкӗшет.
Сăрт-ту пек хумӗсем. Ун витӗр чăмрӗ — тухрӗ:
Чăваш Патшалăхӗ вилсен те чӗрӗлет.

Сив чир, сенсаци ку — парламентри хӗсметшӗн.
Чăваш пусахлама хăять-мӗн тиеке.
Чӗлхе политики трибунăна хӗсет-шим?..
Чăваш чӗлхи тухма пуҫларӗ ирӗке.

Тинех чăваш çынни саккунлă пулчĕ мар-и,
Саккунлă пулчĕ-им тинех чăваш чĕлхи.
Анчах çак саккуна вулас-тăвас пулсаççăн,
Кулса вилмест-и-ха асаттесен чăххи?

Апла унччен вĕлтрен çинчи чĕлхе çеç пулнă
Вĕлтрен çинче çуралнă халăхăн чĕлхи.
Тен, çавăнпа саккунçă мăшкăлланă, кулнă:
Чăваш чĕлхи — хăр типĕ çапă хăраххи.

Саккунсăр халăх ывăл-хĕрĕ те саккунсăр.
Саккун çыракана кирлех саккунлă ăс.
Саккунсăрри ĕçлет — ĕмри иртет ыр кунсăр...
Саккунсăр çурални, ĕç саккунне ан пăс!

Карьера картлашки саккунсăр çыншăн çӳллĕ.
Саккунсăр пурăнсан та — кун çути паха.
Саккунсăр халăх ывăлĕ пĕр шиксĕр кӳлнĕ
Çут çăлтăр çулĕпе вĕçен урхамаха.

Чăваш кунçулĕ атом позитронĕ евĕр
Историкĕн куçне те курăнмасть иккен.
...Позитронсем пулнишĕн пурăнать тĕнчемĕр —
Тĕнче шăпи тăрать вак халăх шăпинчен.

Саккунсăр чĕлхепех асаттесем юрланă,
Вутпа шыв чĕлхипе хӳтернĕ усала.
Такмак çеммипеле çил çавăрса ташланă —
Саккунлă пурăннă тулли пурнăçпала.

Хыпар çаллех çĕн хум ярать: чăваш таврашĕ
Вĕлтрен хунавĕ мар, кăк тĕрĕк йывăççи.
Туратлă хурăн тăрринче ун хурăнташĕ —
Хĕвел тухăçĕнчи Тур Амăшĕн "Аçи".

Хальччен вĕлтрен чĕлхипеле калаçнă халăх
Хĕретмĕ нихăçан та улăпсен йăхне.
Чăвашăн ячĕ-сумĕ пур, пур вăйĕ-халĕ.
Вăл хывнă Улăп-паттăра — аслашшĕне.

Асамлă сасăпа трибуна та вăранчĕ.
"Пурнатпăр-ха!"— янрарĕ чăвашла сăмах.
Чăвашăн архимечĕ аврланă шанчăк —
Шăхăракан йĕтре сулмакĕ пек сăмах.

Эй, Çеçпĕл тинĕсĕ, хумпа çап çирĕпреххĕн —
Чăваш чĕлхи çĕнтерĕ абордажсăрах.
Хисепсĕр чĕлхене трибунăсем кирлех-им?
Пуçа пырса чикме çӳп шăтăкĕ чухах.

Çуралнă çĕн чăваш пит çивĕч пултăр — унăн
Кăвапине те каснă çивĕч çĕçĕпе.
Йăна тĕвĕлекенĕ — юрату саккунĕ —
Пуласлăха та çыхтăр çирĕп тĕвĕпе.

## 3. ПИЛ

"Пурнасшăн-ха!"— каллех сас пачĕ "çĕнĕ кайăк".
Эс турăпа танлашрăн-им çуралсанах.
Эппин, çут тĕнчене чăваш ятпа пуç тай-ха.
Пиллет çакна тумашкăн халăху сана.

Этемлĕх генофончĕн хапхине уçмашкăн,
Маттурăм, çул шыра — ăнланăн хăв камне.
Çынран кая юлма асаттесем хушман-çке...
Çĕклесчĕ çӳлерех вĕсен таса ятне.

# КУКАМАЙ "ЛАШИ"

Ырă кăмăллă кукамая кĕтеттĕм
Эпĕ пуринчен ытла ача чухне.
Туяпа хуллен кăштăртатса килетчĕ,
Кучченеç парса тухатчĕ кашнине.

Ачапча валли пылак "шакки" — астармăш —
Ывçипех кăларчĕ пĕринче хĕврен.
Пысăк сахăр катăкне мана тыттарчĕ:
Пĕчĕкки час çитĕнтĕр çакна çисен.

Сак тулли ача шавлать, сăйлать пурне те —
Хăнапа уяв пĕрле çуреççĕ çав.
Пĕр хĕве хумалăх пĕчĕкçĕ парне те
Хуйхă астивмен чух — чи хавас уяв.

Аслисем кăна çурма саспа пуплетчĕç:
"Колхозра кăçал тырри валеçĕнмен..."
"Куспромри "чăпта хуçи" пыма чĕнет, тет..."
"Заемне саплар ача укçи илсен..."

Кукамай кайма пуçтаранчĕ: "Вĕт-шакăр,
Çавăтса килсемĕр манăн лашана".
Тĕлĕнсе кăн-кан пăхатпăр. Маннă, ахăр.
Астăватпăр-çке — килсеччĕ çуранах.

Вăл татах: "Ав, кĕтесре тăрать хăраххăн
Çул çинчи çынна çур вăй хушаканни.
Хуçине кура "лаши" те ырханрах ман.
Ерипен кăштăртатса çиткелĕп-и?"

Пуринчен те пысăкрах аппа ăнкарнă
Кукамай пире кăштах шахвăртнине.
Туйине пырса тыттарчĕ васкаваррăн,
Ăсатмашкăн кайрĕ ялăн леш вĕçне.

Çавăн чух пичче мана каларĕ: "Кайăп
Çирĕп çĕн туя касмашкăн вăрмана".
"Çул лаши" хавассăн юрттăр кукамайăн,
Çăмăллăн çуретĕр çăмăлпа кăна.

# ПУРНĂÇ УРАПИ ЧӲХЕНЕТ

Ю. Жуков кĕвĕленĕ

Юман ларать кашласа,
Юри хыттăн шавласа.
Сасси атте сасси пек,
Ăс парса ятланă пек.

Пурнăç урапи чӳхенет,
Пурнăç урапи ӳпĕнет.
Пурнăç пурнасси çăмăл мар —
Сывлăш çаварса илме пар.

Çăка ларать кашласа,
Çавра сăмах каласа.
Сасси анне сасси пек,
Манăн хута кĕнĕ пек.

Пурнăç урапи чӳхенет,
Пурнăç урапи ӳпĕнет.
Пурнăç пурнасси çăмăл мар —
Сывлăш çаварса илме пар.

Телей тени тевет мар,
Хуйхи хăйăр купи мар.
Пурăнасчĕ çынсем пек
Атте-анне пилĕпе.

Пурнăç урапи чӳхенет,
Пурнăç урапи ӳпĕнет.
Пурнăç пурнасси çăмăл мар —
Сывлăш çаварса илме пар.

# АРÇЫН КУÇÇУЛĔ
# ВУТ ÇИНЕ ТУМЛАТЬ

Пичче ывăлне, Андрей шăллăма,
Афганистан вăрçă вутне, аллă градуслă
шăрăхне чăтса ирттернĕ салтака

Шăпа тухсан вунсаккăрти ача
Приказ илет: "Кĕрес пулать вăрçа".
Арçын куççулĕ вут çине тумлать —
Суранĕнчен чĕр юнĕ сăрхăнать.

Салтак шутлать асаплă кунсене,
Анне кăна ан куртăр куççульне.
Арçын куççулĕ вут çине тумлать,
Тĕнчемĕр çылăхне унпа çăвать.

Салтак чăтать суранĕ сурнине,
Савни кăна ан куртăр куççульне.
Арçын куççулĕ вут çине тумлать,
Таса юратăва унпа çăвать.

Салтак чăтса ирттерĕ асапне,
Никам та курмĕ унăн куççульне.
Арçын куççулĕ вут çине тумлать,
Тумламĕнчен çут çăлтăр çуралать.

# АСАМЛĂ КĂЛТĂРМАЧ

Вăййа чĕнсе пулас
Юрпа перет кăрлач:
Урок туса пĕтертĕн-и — атя!
Час тăхăн йĕлтĕрне,
Каяр йĕр йĕрлеме —
Тытасчĕ ҫак телейлĕ вăхăта.

Шур кĕрт ҫинчи мулкач —
Асамлă кăлтăрмач,
Ăҫта чупан, ăҫта чупан — тăхта,
Ҫумрах фотопăшал.
Куҫран эс ан ҫухал —
Тытасчĕ ҫак телейлĕ вăхăта.

Анчах кĕтмест мулкач.
Унпа тек ан калаҫ —
Кĕртсем ăшне пытанчĕ вăл таҫта.
Мулкач пек вăшт кăна
Кунҫул та ыткăнать —
Тытасчĕ ҫак телейлĕ вăхăта.

Эй, вăхăт — кăлтăрмач,
Чăн ҫилхăван мулкач,
Кунсем-ҫулсем хыҫне чăмать — тăхта.
Асамлă кăлтăрмач
Самантлăх чарăнмасть.
Тытаймăн иртсе кайнă вăхăта.

# ПАРНЕЛЕНĔ ШУÇĂМ

Петр Романов кĕвĕленĕ

Парнене параççĕ хире-хирĕç.
Парнелерĕн эсĕ шурăмпуç шевли.
    Ай, шурăмпуç кĕрен
    Манран эс мĕн кĕтен?
Саншăн тĕлкĕшет ман чун шевли:
Парнене параççĕ хире-хирĕç.

Кăмăл çумне кăмăл — хире-хирĕç.
Калаçу пуçланчĕ кăмăлна кура.
    Сассу шăнкрав иккен.
    Манран эс мĕн кĕтен?
Саншăнах юрлатăп çак юрра:
Кăмăл çумне кăмăл — хире-хирĕç.

Савнисем саваççĕ хире-хирĕç.
Парнўне эп йышăнатăп чĕререн.
    Ку юрату иккен.
    Манран эс мĕн кĕтен?
Савăнса юрлас килет куллен.
Савнисем саваççĕ хире-хирĕç.

# ТĔНЧЕ ÇИНЕ ÇĔМЕЛ ÇИНЧЕН ТИНКЕРТĔМ...

Тĕнче çине çĕмел çинчен тинкертĕм
Аннепеле тыр вырнă чух тахçан:
Йĕтем çинчи тыр кăшалĕ пуль, терĕм,
Ирхи хĕвел шевлиллĕ тухăçа.

Тĕнче çине уй варринчен тинкертĕм,
Пĕр ĕç тытсассăн мăшăр аллăма.
Тырпул ăсти юхтарнă тар пуль, терĕм.
Çăра калча çинчи çут сывлăма.

Тĕнче çине йĕтем çинчен тинкертĕм,
Çулсем иртсен, пĕр тулăх кĕкунне.
Ял-йыш чун-чĕринчи хĕлхем пуль, терĕм,
Тин сăвăрнă сар тулă кăшăлне.

# ТУРĂ КĂМĂЛĔ

Ырри енне те, усалли енне те — çур утас.
Тĕнче хăй вырăнче тĕп-тĕрĕсех тăрать пулас.
Ырри енне ăна ман куçарас килет кăштах.
Пурпек вăйпа тĕртсе пăхатăп акă тайăлсах.
"Ухмах эс, — терĕç хăшĕсем, — сикмест вăл вырăнтан.
Тапратăн пилĕке е хуçăн ĕнсӳне, айван".

Анчах та пăрăнас килмерĕ хамăн шухăшран.
Поэтăн чăркăшланасси малта пырать ялан.
Мĕскер туятăп — чун сисет: вăл вырăнтан сикет...
Ман пек пин-пин ухмах тĕксен, ырри патнех çитет.

Çӳрет-ши туйăм шухăшран малта
Хăватлă турă кăмăлĕ пулса:
Пачах та систермесĕр пулăшать,
Асамлă вăй-хăват та вăл хушать.
Пусатăп кăмăл туртăннă еннех —
Тĕнчемĕр те куçать манпа пĕрлех.

Ырри енне те, усалли енне те çул каять,
Тĕнче тени хăй вырăнче тĕп-тĕрĕсех тăрать.
Этем хăш еннелле ярса пусать,
Тĕнче те çав енне кăштах куçать.

# АВТОР ХӐЙ ÇИНЧЕН КӖСКЕН КАЛАНИ

ÇУРАЛНӐ: 1953 çулта нарӑсӑн 14-мӗшӗнче Çӗрпӳ районне кӗрекен Тури Шурçырма ялӗнче.

ВӖРЕННӖ: вӑтам шкулта, тӑван республикӑмӑрти аслӑ вӗренӳ заведенийӗсен техни ка тата гуманитари факультечӗсенче.

ӖÇ-ХӖЛ: ялхуçалӑх специалисчӗ, вӑтам сыпӑкри ертӳçӗ, учитель, шкул директорӗ.

ПУЛТАРУЛӐХ ТӐМХИ: Раççей Федерацийӗнчи писательсен союзӗн членӗ.

ПАТШАЛӐХ НАГРАДИСЕМ, ХИСЕПЛӖ ЯТСЕМ: çук.

ЮРАТАТӐП: арӑма, ачасене, чуна тӑвӑнтаракан шухӑш-туйӑма хут çине куçарма... Пушӑ вӑхӑтра йӳçӗ груша йывӑççисене сыпса тутлӑлантарма юрататӑп. Кайран çав сортлӑ йывӑç хунавӗсене паллакансене парнелени кӑмӑла тултарать. Тӗнче мехелӗ çапла-çке: пурнӑçа йӳçеклетекенсем пур пулсан, ӑна тутлӑлантаракансем те пулмаллах.

ШУХӐШЛАТӐП: пурнӑçа — çутçанталӑк парнине — чи хаклӑ телей вырӑнне хумастӑп. Хӑйне пӳрнӗ пурнӑçне кашниех пурӑнма пултарать. Анчах парне тени хире-хирӗç пулмалла-çке: пурӑнан пурнӑçра кашниннех, хӑйӗн пулта рулӑхне кура, çутçанталӑк валли парне хатӗрлесе хӑвармалла. Пурнӑç хакӗ çав парне хакӗпе танлашать те.

ХӐРАТӐП: сӑмах чӗнмесӗр иртсе каякансенчен тата вӗрмен йытӑсенчен.

ӖНЕНЕТӖП: турра тата хама.

# ТУПМАЛЛИ


стр.

Кашни ăру ёненĕвне . . . . . 3
Тăван Ен — Çĕрпӳ районĕ . . . . . 3
Юппи (поэма) . . . . . 5
Çуралман ача сасси (поэма) . . . . . 20
Ӳкерчĕклĕ çыру (поэма) . . . . . 34
Кăмака ăсти (поэма) . . . . . 46
Çăка палăкĕ . . . . . 63
Ача чӳклевĕ . . . . . 66
Кукамай "лаши" . . . . . 70
Пурнăç урапи чӳхенет . . . . . 71
Арçын куççулĕ вут çине тумлать . . . . . 72
Асамлă кăлтăрмач . . . . . 73
Парнеленĕ шуçăм . . . . . 74
Тĕнче çине çĕмел çинчен тинкертĕм . . . . . 75
Турă кăмăлĕ . . . . . 76

Николай ИЖЕНДЕЙ

ДУША ОТ БОГА
(стихи и поэмы)

ТУРĂ КĂМĂЛĔ
(сăвăсемпе поэмăсем)

Редактор Л. ЕГОРОВА
Художественный редактор Л. ЕГОРОВ

Подписано в печать 5.09.97 г. Формат 60х84/16. Объем 5 ус. п. л.
Заказ № 5200. Тираж 1000. Бумага газетная.

Цивильская типография
Министерства информации и печати ЧР.

Цивильская типография